ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
4
юнкун
№ 216 (9125)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Вăрманпа хут промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Еç тухăçлăхне ÿстерĕр, механизмсемпе туллин усă курăр! Продукци пахалăхне пур майсемпе те лайăхлатса, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетсе пырăр! Йывăç материалсем, хут тата сĕтел-пукан нумайрах туса кăларăр!

(КПСС Центральнăй Комитечĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа чĕнсе каланисенчен).

Ялхуçалăх специалисчĕсен Тăван çĕршыв умĕнчи пысăк тивĕçĕ

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пирĕн çĕршывра социализмла ялхуçалăхĕ пысăк хăвартлăхсемпе малалла аталанса пырать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ социализмла ялхуçалăхĕ умне, мĕнпур ялхуçалăх ĕçченĕсем, мĕнпур ялхуçалăх специалисчĕсем умне пысăк та ответлă задачăсем лартать: çитес 2—3 çул хушшинче хамăр çĕршывра халăх çуса пырақан ытлăхĕсене апат-çимĕç продукчĕсем çителĕклĕх пархса тивĕстерсепле тăвас пулать, çавăн çинче ... тапăрулла шар ... (...).

Çак задачăна пысăк пурнăçлас пирки, совет, ялхуçалăх органĕсем, ялсенчи коммунистсемпе комсомолецсем, мĕнпур колхозниксем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем пĕтĕм вăй хурса ĕçлени кирлĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçлас ĕçре ялхуçалăх специалисчĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ялхуçалăх специалисчĕсене ĕçлеме, хăйсен пĕлĕвĕсене куллен ÿстерсе пыма, пурнăçа лайăх условисем туса памашкăн. Государство аслă тата вăтам шкулсенчен ялхуçалăх специалисчĕсене çĕршер пин çын хатĕрлесе кăларчĕ. Анчах çак специалистсен пысăк пайĕ пурнăçчен ытла ялхуçалăх органĕсен аппаратĕнче ĕçлет. Вĕсем колхоз производствине çителĕксĕр çывăх ĕçлеççĕ. Вĕсен пĕр пайĕ кăна тÿрех колхоз производствинче хутшăнать. Тĕслĕхрен, пирĕн республикăра сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне агрономсемпе зоотехниксем пĕтĕмпе 977 çын шутланнă пулсан, вĕсенчен колхозсенче пурĕ те 122 çын кăна ĕçленĕ. Зоотехниксем илес пулсан, вĕсем колхозсенче пурĕ те 16 çын кăна пулнă. Çакă вăл акă мĕн çинчен калать: кашни 7 колхоз пуçне пĕр агроном, кашни 50 колхоз пуçне пĕр зоотехник тивнĕ. Паллах, вĕсем халăх вăхăтра колхоз производствин ыйăвне тăракан ĕçсене тивĕçтерсе пыма йывăр пулнă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ĕçсем çавăн пек пыни—пĕр ялхуçалăх специалисчĕ темиçе колхозра ĕçлесе тăни ялхуçалăхне умĕнче тăракан пысăк задачăсене пурнăçлама кансĕрлет, тесе шутлать. Специалистсен вырăнĕ — колхозсенче, МТС-сенче, совхозсенче пулмалла. Вĕсен тĕп ĕçĕ приказсем, инструкцисем туса ларасси мар, тырпул тухăçлăхне ÿстерес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсене туса пырасси пулать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ çапла шутлать: халăхн условисенче, колхозсем шутра, нумай отраслĕ хуçалăхсем пулса тăнă вăхăтра, машина-трактор станцийĕсем кучухнехи техникăна хăвăртлама та ... вĕсем ялхуçалăх производствинче тĕп вырăн йышăнса тăнă вăхăтра, колхозсемпе МТС-сене квалификациллĕ кадрсемпе, хуçалăха пĕлсе ертсе пыма, ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме пултаракан кадрсемпе çирĕплетни пысăк вырăн йышăнать.

Çакна шута илсе, пленум 1954 çулхи суркунне тĕлне колхозсенче ĕçлеме МТС-сене 100 пин çын агрономсемпе зоотехниксем яма йышăнчĕ.

Парти чĕнĕвне ялхуçалăх специалисчĕсем хапăл туса йышăнчĕç. Нумай агрономсемпе зоотехниксем, Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсемпе хавхаланса, МТС-семпе колхозсенче ĕçлеме кайма хăйсем ыйтса тăрăç. Партипе совет органĕсем, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерсе, халăхн вăхăт тĕлне республикăри МТС-семпе колхозсенче, совхозсенче ĕçлеме 696 специалист янă. Вăл шутран: 309 агроном, 306 зоотехник. Çакă вăл ялхуçалăхне пысăк, конкретлă пулăшу пани пулать. Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ районĕсенче МТС-сен штатĕсенче тăракан агрономсемпе зоотехниксене колхозсенче ĕçлеме илсе çитерĕ ĕнтĕ. Çав вăхăтрах, Вăрмар МТС-не колхозсенче ĕçлеме 30 агроном тата зоотехник кирлĕ пулсан, паянхи куна пурĕ те 19 специалист кăна колхозсенче ĕçлеме янă. Елчĕк районĕнче ĕçсем кунтан та начартарах тăраççĕ. 32 çын вырăнне 18 çын кăна уйăрнă. Çакă вăл доланă районсенчи парти комитечĕсем МТС-сем валли кадрсем суйласа илесси çине тимсĕр пăхни çинчен калать.

Парти, совет, ялхуçалăх органĕсен колхозсенче ĕçлеме МТС-сене кадрсем уйăрса панипе лăпланса лармалла мар. Ку вăл ĕçĕн пуçламăшĕ кăна пулать. Çак специалистсене — колхозсенче, МТС-сенче, совхозсенче ĕçлеме килнĕ агрономсемпе зоотехниксене — МТС-сенчен ăшшăн йышăнса илмелле. Вĕсене пурăнма кирлĕ лайăх условисем туса памалла, çуртсем лартма пулăшмалла. Унсăрăн колхозсене агрономпа зоотехник ... нумай ... тивĕçлĕхне ...

КПСС Центральнăй Комитечĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа ялхуçалăх специалисчĕсене çапла чĕнсе каларĕ:

— Ялхуçалăх работникĕсем! Социализмла ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те çĕнĕрен хăватлăн çĕклентересшĕн кĕрешĕр: çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче пирĕн çĕршывра халăхăн ÿссе пыракан ытлăхĕсене тивĕçтерме кирлĕ чухлĕ апат-çимĕç продукчĕсем, çăмăл промышленноçе чухлĕ чĕртавар парса тăмалла пултăр!

— Колхозниксемпе колхозницăсем! Çĕршывра пур колхозсене те малалла вăйлатса тата ... пырăр! Общественнăй хуçалăха тĕрекелтерессишĕн, çĕрпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тĕп пур енĕпе те аталантарса вăйлатассишĕн, пĕтĕм продукцийĕ тавара продукцие ÿстерессишĕн кĕрешĕр! Наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыта колхоз производствине активнăрах кĕртсе пырăр! Колхозсен тупăшĕсене ÿстерĕр, колхозниксен пурнăçне малалла лайăхлатăр!

— Ялхуçалăх работникĕсем! Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пур майсемпе те аталантарса пырăр, выльăх-чĕрлĕх йышне хăвăрт ÿстерĕр, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне татăклăнах хăпартăр! Выльăх-чĕрлĕх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлессишĕн кĕрешĕр, выльăх-чĕрлĕх çуртсене тивĕçтерсе хатĕрлесе ... вăйлатса пырăр!

— Машина-трактор станцийĕсемпе совхозсен работникĕсем! Тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти ялхуçалăх машинисемпе лайăхрах та туллинрех усă курăр! Мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне пур майсемпе те ÿстерессишĕн, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатассишĕн, колхозсемпе совхозсене çĕрçе выльăх-чĕрлĕх продукцине ÿстерессишĕн кĕрешĕр!

— Колхозниксемпе колхозницăсем, машина-трактор станцийĕсемпе совхозсен работникĕсем! Çĕрулмипе пахча çимĕçсем туса илессине хăвăрт ÿстерĕр! Çак культурăсен тухăçлăхне чылай ÿстерĕр, пахча çимĕçсемпе çĕрулми лартса ÿстерес ĕçе малалла çинче механизацилĕр, çак ĕçре малта пыракан агроном меслечĕсемпе ытларах усă курăр!

Çак сăмахсенче пирĕн Коммунистсен партийĕ ялхуçалăхĕ тĕлĕшпе тытса пыракан политика яр-уççăн палăрса тăрать.

Парти чĕнĕвĕсем ялхуçалăх специалисчĕсемпе нумай вăхăта пыракан кĕрешÿ программи пулса тăраççĕ.

Центральнăй Комитет ялхуçалăх ĕçченĕсем умне калăрса тăратнă çак конкретлă та практикăлла задачăсене пурнăçлассишĕн, Тăван çĕршыв ырлăхĕ вăхатне ÿстерессишĕн ялхуçалăх специалисчĕсен куллен паттăрăн кĕрешсе пымалла.

Ялхуçалăх специалисчĕсен хăйсене партипе правительство шанса панă пĕтĕм ответлăха чĕререн туйса, вăйлă тырпулшăн, йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешмелле.

Агрономсем, зоотехниксем ĕçĕнче совет агробиологи наукин çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыта колхоз производствине анлăн кĕртсе пырассишĕн, колхоз производствинче мĕнпур çĕннине малалла аталантарса пырассишĕн кĕрешесси тĕп вырăнта тăмалла.

Юлашки çулсенче пирĕн колхозсен вăйлă тырпул туса илес ĕçре, йышлă та пысăк тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешÿре пуян опыт туянчĕç. Малта пыракан колхозсен тивĕçĕ тата çитĕнÿсене вара кашни колхозăн тата хуçассишĕн, çарапа вара ялхуçалăх умне каларса тăратнă задачăсене анлăн пурнăçлассишĕн кĕрешесси мĕнпур ялхуçалăх специалисчĕсен Тăван çĕршыв умĕнчи пысăк тивĕçĕ пулса тăрать.

Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа

Республикăри ĕçчинисем Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнине ... тĕлĕ ...

Ун умĕнче социализмла ĕçтăвăçа хутшăнса, Шупашкарти ... предприятийĕсен колективĕсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçлаççĕ. Лента тĕртекен фабрика ĕçченĕсем 11 уйăхри ... октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăçларĕç, ... комбинат ... виçĕмĕш ... кварталти ... социализмла ăмăртура малта пыса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсовет ... кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа ... тесенче савăнăçлă пухусем пулаççĕ. Ноябрĕн 2-мĕшĕнче ... пухусем ... комбинатĕнче, ноябрĕн 3-мĕшĕнче Чăваш ... ирттерчĕç.

Хамăр республикăра

Районти ялхуçалăх выставкинче

ПЕРВОМАЙСКИ. Çак кунсенче кунта районти ялхуçалăх выставки пухса иртрĕ. Выставкăна 23 колхозран 19 колхоз хутшăнчĕ.

Выставкăна тăратнă экспонатсем районти чылай колхозсем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес, общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе палармалла çитĕнÿсем тунине кăтартса пачĕç.

«Путь коммунизма» колхозăн шултра пучахлă ыраш тĕлĕшне пурте тытса пăхаççĕ. Мелиоратор ... ирĕк ... агротехника ... пусса ... гектар çинчен ... 17,8-шер центнер, 47 гектар çинчен 21,4-шер центнер «Казанская» сортлă ыраш туса илнĕ, 5 гектар çинчен кашни гектартан 110 пăт кĕрхи тулă пухса кĕртнĕ.

Шверник ячĕпе, Карл Маркс ячĕпе тăракан тата «Путь коммунизма» колхозсенче кăçал «Дипше» сортлă сĕлĕ лайăх пăхса ÿстернĕ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра çак сортлă сĕлĕн тухăçлăхĕ гектар пуçне 23 центнера çитнĕ. Мичурин ячĕпе, Хрущев ячĕпе тăракан колхозсенче кашни гектартан 23—24-шар центнер вир туса илнĕ.

Районти колхозсем пăрса йышши культурăсен тухăçлăхне те ÿстерсе пыраççĕ. «Пионер» колхозра «Торсдаг» сортлă пăрса тухăçлăхĕ кашни гектартан 22 центнер пулнă.

Выставкăра техникăлла культурăсемпе тымарçимĕçсен тата пахча çимĕçсен стенчĕ пысăк вырăн йышăнать. Çав культурăсене пăхса ÿстермелли агротехникăна лайăх пурнăçласа пырса, малта пыракан колхозсем вĕсен тухăçлăхне хăвăрт ÿстерсе пыраççĕ, пысăк тупăш кураççĕ.

«Путь коммунизма» колхоз кăçал йĕтĕн пахча туса илес тĕлĕшпе районта малта вырăна тухрĕ. Кунта 28 гектар çинчен кашни гектартан 8-шар центнер, Н. Антонов юлташ бригади 6 гектар çинчен 12-шер центнер ытла пĕтĕн вăррине пухса кĕртнĕ.

Тымарçимĕçсем пăхса ÿстерес тĕлĕшпе кăçал та «Пионер» колхоз мухтава тивĕç. Ку колхозри А. Рейнов юлташ бригади гектартан 850-шар центнер выльăх кăшманĕ кăларса илнĕ.

Первомайскинчи вăтам шкулти çамрăк натуралистсен кăçал шкул пахчинче гектар пуçне 925 центнер выльăх кăшманĕ, 900 центнер «Барда» сортлă сахăр кăшманĕ çитĕнтернĕ.

Ешĕксем çинче шултра çĕрулмисем, кишĕр, купăста пуçĕсем куракансене илĕртсе тăраççĕ. Маленков ячĕпе тăракан колхозра «лорх» тата «апрон» сортлă çĕрулмисене кăçал тăватăкал тĕмĕн лартнă, вĕсене çу васçичен 2—3 хут кăпкалатнă, ретсем хушшине икĕ хут купаланă. Çапла кашни гектартан 180-шар центнер çĕрулми тунă. Çак меслетпех лартнă çĕрулмин тухăçлăхĕ «Большевик» колхозри Антонов юлташ бригатинче гектар пуçне 200 центнер пулнă. Ленин ячĕпе тăракан колхозри И. Карпинов юлташ бригади кашни гектартан 412 центнер купăста, 410 центнер «Нантская-04» сортлă кишĕр туса илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх павильонĕнче те куракансем нумай. «Пионер» колхозри К. Соколова хоярка пăхакан «Февралька» ятлă ĕне тайра çынсем уйрăмах йышлă. Ку ĕнен чĕр вĕç 520 килограмм таять, кăçал вăл выставка куне тĕлне 2.639 литр сĕт панă. Çак колхоз палăх тетпнице А. Камышова выставкăна хăй пăхакан виçĕ пăрăва илсе пынă, вĕсен виççĕн те талăкра вăтам шутпа 600-шер грамм ытлашши çыраççĕ. Акă «Руслан» ятлă пăру кăçалхи февраль уйăхĕнче çуралнă. Вăл халĕ 164 килограмм таять.

Районти ялхуçалăх выставкине икĕ кун хушшинче 3 пин çын ытла пырса курчĕç. Ялхуçалăхĕнче çитĕнÿсем тунăшăн выставкăра 65 çынна премисем пачĕç.

А. ТУКМАКОВ.

«АГИТАТОР БЛОКНОЧĔН» ЧЕРЕТЛĔ НОМЕРĔ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 20-мĕш номер пичетленсе тухнă. Унта М. Николаевăн «Çĕрулмипе пахча çимĕçсем ытларах туса илер»; В. Дмитриевăн «Совет суту-илĕвне малалла лайăхлатса пырар» тата «Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгрессĕ» ятлă статьясем пичетленнĕ.

Агитаци ĕçĕн опычĕ çинчен Ишлей районĕнчи «Знамя труда» колхозри П. Лазарева агитатор КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «СССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантарасси çинчен» ... постановленине колхозниксене ăнлантарса панине çинчен каласа пани пичетленнĕ.

Агитаторсем валли каласура усă курма социализмла ... ăмăртура ... çырма ... асăнлă ... фактсем пур.

Чăваш АССР-ĕнчи промышленность, транспорт, сыхăну тата суту-илÿ предприятийĕсем 1953 çулхи III-мĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен

Чăваш АССР-ĕнчи промышленность, транспорт, сыхăну тата суту-илÿ предприятийĕсем 1953 çулхи виççĕмĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсовет президиумĕ çапла йышăннă:

Союзла министерствăсене пăхăнса тăракан предприятисем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне СССР ... промышленность таварĕсен министерствин Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ памалла тунă (директорĕ Бейренев юлташ, завком председателĕ Потрова юлташ). Комбинат виççĕмĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана пĕлтерни ассортимент енĕпе 123,1 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 30,4 процент иртерсе тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнĕ, 595 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Çĕмĕрлери йывăç ялалсем тăвакан тата Улатăрти пăравуссем юсакан заводсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Çăмăл промышленность предприятийĕсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Улатăрти атă-пушмак фабрикине памалла тунă (директорĕ Дембицкий юлташ, завком председателĕ Цветков юлташ). Фабрика виççĕмĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 131,8 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 45,8 процент иртерсе тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнĕ.

Шупашкарти лента тĕртекен фабрика лайăх ĕçленине палăртнă.

Транспорт енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкар станцийĕн транспортла экспедици кантурĕнчи хăварма тунă (начальникĕ Андрейчев юлташ, местком председателĕ Агафонов юлташ). Çак кантур виççĕмĕш кварталти плана чылай иртерсе тултарнă, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 27 процент иртерсе тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 20,7 процент йÿнетнĕ.

Кире станцийĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Районсенчи вырăнти промышленность предприятийĕсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Улатăр хулинчи промкомбината памалла тунă (директорĕ Милушкин юлташ, местком председателĕ Помявин юлташ). Ку промкомбинат виççĕмĕш кварталта пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 130,4 процент, тавар продукци туса кăлармалли плана 124 процент тултарнă.

Çĕмĕрле районĕнчи промкомбинат лайăх ĕçленине палăртнă.

Вырăнти топливо промышленность предприятийĕсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Вырăнти тата топливо промышленность министерствин Çĕмĕрле вăрманпромхозне памалла тунă (директорĕ Храмкин юлташ, рабочком председателĕ Чаликов юлташ). Вăрманпромхоз, виççĕмĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 126,2 процент, йывăç хатĕрлемелли плана 106,6 процент, йывăç турттарса кăлармалли плана 242,8 процент тултарнă.

Улатăр вăрманпромхозĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Вăрманпа хут промышленность предприятийĕсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне «Волгохимлес» трестăн Улатăрти химлесхозне памалла тунă (директорĕ Намалов юлташ, рабочком председателĕ Надточий юлташ). Химлесхоз виççĕмĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 119,3 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 3,9 процент ... продукцин хăйне ларакан хакне 4,1 процент йÿнетнĕ тата планран иртерсе 251 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Вăрнар вăрманпромхозĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Сыхăну предприятийĕсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне чугун çулсем тăрăх почта тиесе çÿрекен Канаш уйрăмне памалла тунă (начальникĕ Захарова юлташ, рабочком председателĕ Алешова юлташ).

Кÿкеçри сыхăну кантурĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Улатăрти юсавпа строительство кантурĕнчи хăварма тунă (начальникĕ Демин юлташ, местком председателĕ Краснова юлташ). Ку кантур виççĕмĕш кварталти производство планне 140 процент, вăл шутра пурăнмалли çуртсене тĕпрен юсамалли плана 138,9 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне 29,3 процент ÿстернĕ.

Атăл леш енчи электростанцийĕ Шупашкарти гостиница лайăх ĕçленине палăртнă.

Суту-илÿ предприятийĕсемпе столовăйсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Чăвашторгăн Çĕмĕрлери уйрăмне памалла тунă (управляющийĕ Гутченко юлташ, местком председателĕ Натальин юлташ). Ку уйрăм виççĕмĕш кварталти тавар çаврăнăш планне: вăхкăн тавар сутас енĕпе—106,4 процент, столовăйсем енĕпе—102,6 процент тултарнă.

Апат-çимĕçпе сĕт-çу промышленность предприятийĕсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкарти макарон фабрикинчи хăварма тунă (директорĕ Иванов юлташ, фабком председателĕ Митягин юлташ). Фабрика виççĕмĕш квартал планне ассортимент енĕпе 119,1 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 16,1 процент иртерсе тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 13,1 процент йÿнетнĕ.

Районсенчи апат-çимĕç промышленность предприятийĕсем енĕпе

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Калинино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ памалла тунă (директорĕ Малов юлташ, местком председателĕ Журавлев юлташ). Апат-çимĕç комбиначĕ виççĕмĕш кварталта плана палăртнă ассортимент енĕпе 156,8 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 55,8 процент иртерсе тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне плана 3,8 процент вырăнне 10,5 процент йÿнетнĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи тата Вавош хулинчи апат-çимĕç комбинатĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.



Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕх валли сителлĕ апат хатĕрленĕ. Кăçал силос хывмалли полубашня, унта 105 тонна силос хывнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: силос хывмалли полубашня.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Вăрлăх участокĕсенче ĕçлекенсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта республикăри сортлă вăрлăх çăнасан участокĕсенче ĕçлекен ялхуçалăх специалисчĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Я. Федотов юлташ тĕшпуçăрсене силос тумалли культурасен тата нумай çул ÿсекен курăксен сортлă вăрлăхĕсене хамăр республикăра çăнаса пăхнин итогĕсем çинчен тунă доклада сÿтсе явре.

Кăçал республикăра ыраш чылай сорчĕсене çăнаса пăхнă. Уйрăмах пĕрремĕшне ... участокĕнче «Вятка» сортлă ыраш ... тухăçлă пулнă. Сорт ... ырашăн тухăçлăхĕ ... тĕрлĕ ... çерте культурисем акнă ĕçртме пуссинче те çăнаса пăхнă. Элĕк районĕнчи участокра вика-сĕлĕ акнă ĕçртме пуссинче пур йышши сортлă ыраш тухăçлăхĕ те хура çĕртме пуссине аканине 30—40 процент ытларах пулнă. Çапла, хура çĕртме пуссинче «Вятка» сортлă ырашăн кашни гектартан вăтам шутпа 26,5-шер центнер, вика-сĕлĕ акнă çĕртме пуссинче кашни гектартан вăтам шутпа 35,2-шер центнер ыраш пухса кĕртнĕ.

Пур участоксенче те тухăçлă кĕрхи тулă çитĕнтернĕ. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи участокра «Ульяновка» текен тулă кашни гектартан вăтам шутпа 36,7-шер центнер тухнă.

Сурхи тулăн 14 йышши сортне çăнаса пăхаççĕ. Республикăн сурçĕрти тата тĕп зонăсенчи участокĕсенче «Гордейформа 496», кăнтăр енче вырнаçнă участоксенче «Арнаутка Немерченская» сортсем тухăçлă пулнă.

Республикăн участоксенче çичĕ йышши сортлă сĕлĕ çăнаса пăхнă. Уйрăмах «Дипше» сортлă сĕлĕ пысăк тухăçлă пулни палăрнă. Çак сĕлĕ кашни гектартан вăтам шутпа 21—35-шер центнер тухнă.

Урмà сорчĕсене виçĕ участокра çăнаçре. Кăçал 12 сорт çăнаса пăхнă. Тăвай районĕнчи участокра вырăнти «Алнорский» сорт кашни гектартан 25,3-шер центнер тухнă.

Çăнаса пăхнă вирсенчен «Долинское 86» ятли тухăçлăрах пулнă.

Çавăн пекех сортлă хуратулпа пăрçа авса çăнаса пăхнă. «Торсдаг» сортлă пăрçа пур çĕрте те тухăçлăрах пулнă.

Шупашкар районĕнчи участокра çимĕç удобрени туса кайнан люпин авса çăнаса пăхнă. Виçĕ çул хушшинче «Чувашский» сортлă люпин гектар пуçне 256 центнер симĕс курăк панă.

Нумай çул ÿсекен курăксенчен—клевер, люцерна, тимофеевка сорчĕсене çăнанă. Клеверăн вырăнти сорчĕсем пур участоксенче те тухăçлă пулнă.

Тимофеевка сорчĕсене пирĕн республикăра çав-çавăс сахал акса тăнаççĕ. Çăнавлă ĕçсем те çителĕксĕр туса иртернĕ. Çакна асăрхаттарса: тимофеевкăна уйăх культурăсемпе хутăштăрма акса, çак курăк тухăçлăхĕ сахал пулать. Люцерна сорчĕсене тата эспарцет сорчĕсене тĕплĕнрех çăнаса пăхни кирлĕ. Эспарцет гибридне çăнани лайăх результатсем панă.

Чумизăн вырăнти сорчĕсене акан çуркунне çăнас. Ку культурăна малашне те çăнаса пăхмалла.

Махорка совхозĕнче

Улатăрти махорка совхозĕн коллективĕ çак кунсенче нихçанхинчен те пысăк хастарлăхпа ĕçлет.

Совхоз коллективĕ çак уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, государствăна махорка, ... панипе ... сĕт-çу ... ĕнесемпе ... сĕт суса илмелли, кĕрхи çĕртме тата хура çĕртме тумалли плансене срокчен тултарма йышăнчĕ.

Пĕлтĕр ... кашни ĕнерен 2.400 литр сĕт суса илмелле пулсан, октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлнех 2.250 литр сĕт суса илнĕ. Совхоз государствăна 360 тонна ытла сĕт, 570 тонна ... панă.

Махорка лартса тăвакансем кăçал тухăçлă ĕçлерĕç. Вĕсем 220 гектар çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектартан 24 центнера яхăн махорка туса илнĕ. Совхоз государствăна 300 тонна пахa махорка панă. Октябрь уявĕччен тата 170 тонна парать.

Кунти механизаторсен пархатарлă ĕçне те асăнмасăр иртме çук. Вĕсем тракторсемпе ĕçленине совхоз кĕрхи çĕртме туса ... пĕтернĕ, 900 гектар хура çĕртме тунă.

1951—1952 çулсенче лайăх ĕçленĕшĕн СССР Апат-çимĕç тавареĕсен промышленноçĕн министерствин табак промышленноçĕн главнăй управленийĕ парнисене парать, çак кунсенче А. Поршнова И. Зиновьевсем ... кашнинне 3.850-шар тенкĕ укça парса премиленĕ.

С. НОВИКОВ,
Махорка совхозĕнчи парторганизаци секретарĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шăхасан районĕнчи партконференци

Çак кунсенче Шăхасан районĕнчи VII-мĕш партконференци пулса иртрĕ. КПСС райкомĕн ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ М. Родионов юлташ доклад туса пачĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕпе республикăри парторганизацин XXIV-мĕш конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçласа, районти парторганизаци хуçалăхпа культура строительствине тата партиллĕ-политикăлла ĕçсене ертсе пырас тĕлĕшпе отчетлă тапхăрта чылай çитĕнÿсем турĕ. Районти нумай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пыраççĕ. 19 колхозра çавăнсăр çаврăнăшне йĕркелесе çитерне. Çавна кура чылай колхозсенче, уйрăмах «Победа», «Герой», Ленин ячĕпе, Ворошилов ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан колхозсенче çĕрĕç культури лайăхланчĕ. «Герой» колхозри Иванов юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади гектартан 22 центнер тулă туса илнĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те çитĕнÿсем пур. Паянхи куна районти колхозсем обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлесси те ăнăçлăрах пулса пырать.

Конференци ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. Нумай колхозсем çулсеренех сахал тухăçлă тыррул туса илеççĕ. «Дружба», «Слава», «Вперед», «Знамя» колхозсенче тыррул тухăçлăхĕ, вăтамран илсен, гектар пуçне 7—8-шар центнертан иртмест. Кун пек колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене агротехника правилисене пурнăçламасăр тăваççĕ. «Память Ильича», «Герой», «Дружба» колхозсенче гектар пуçне вăтамран 50-шар центнертан ытла мар çĕрулми туса илнĕ.

Уйрăм колхозсем обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Районти колхозсен мăйракаллă шултра выльăхсен фермисенче ĕнесем 26,7 процент кăна. Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш пысăк мар. Кăçал вăтам шутпа кашни ĕнерен 687-шер литр сĕт суса илнĕ.

Машина-трактор станцийĕ хăйĕн ĕçĕсене КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хушнă пек йĕркелесе çитереймен. Нумай механизаторсем ĕç нормине тултараймаççĕ.

— Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ,—тет Жданов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Миронов юлташ,—МТС ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Колхозсене çĕнĕрен янă агрономсемпе зоотехниксем халĕ те йĕркеллĕ ĕçлеме тытăнман.

Делегатсем çавна палăртаççĕ: чылай колхозсем вĕлте кÿрсе, авăн çапса пĕтереймен. Ферма çурчĕсене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕçсем те çителĕксĕр пулса пыраççĕ.

Павлов, Антонов, Воскресенская юлташсем парти райкомĕ кадрсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарас, йышăннă решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени çинчен каларĕç. Райком нумай решенисем йышăнать, анчах вĕсем мĕнле пурнăçа кĕнине тĕрĕслесе тăмасть.

— Эпир,—тет делегат Воскресенская юлташ,—хĕрарăмсене обществăлла ĕçе активлăн хутшăнтарас тĕлĕшпе условисем туса пама тăрăшмастпăр-ха. Хĕрарăмсене ĕçе суйласа лартас тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлетпĕр. Колхоз председателĕсемпе МТС директорĕсен шутĕнче пĕр хĕрарăм та çук.

Чылай делегатсем районти парторганизацире КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановленине ĕçсыннисене ăнлантарса парас ĕç çителĕксĕр пулса пыни çинчен каларĕç. Районти ертсе пыракан работниксем ĕçсыннисене колхозсенче лекцисем сахал вуласа параççĕ, райком работникĕсем пуçламăш парторганизацисене партиллĕ-политикăлла ĕçе лайăхлатма сахал пулăшаççĕ.

— Парти райкомĕн секретарĕсемпе ытти работниксем,—тет Куйбышев ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ Яковлев юлташ,— пирĕн колхозра час-часах пулаççĕ, анчах та парторганизаци партиллĕ-политикăлла ĕçе мĕнле йĕркеленипе сахал интересленеççĕ. Эпир август уйăхĕнчи ĕç планне райкомăн пропагандăпа агитаци пайĕне килĕштерсе турăмăр. План тăрăх колхозниксене социализмла законлăх çинчен лекци вуласа пама палăртнăччĕ. Унтанпа ĕнтĕ виçĕ уйăх иртрĕ. Анчах та лекципе килекен пулмарĕ. Парти райкомĕнчен пыракан докладчиксем доклассене тăван чĕлхепе туса памаççĕ.

Доклад тăрăх 20 çын тухса каларĕ.

Конференцире КПСС обкомĕн секретарĕ С. М. Ислюков юлташ пулчĕ.

Конференци парти райкомĕн çĕнĕ составне суйларĕ.

Организациллĕ пленумра КПСС райкомĕн секретарĕсем пулма П. В. Владимиров, В. Е. Кузнецов тата А. В. Васильев юлташсене суйланă.

К. ВАНЮШКИН.

Коммунистсем производство планне тултарассишĕн кĕрешеççĕ

Кăçалччен пирĕн фабрика шурă катан пир тĕртнĕ. Кăçал эпир фасонлă пир тĕртме задани илтĕмĕр. Çакă фабрика коллективĕшĕн питĕ йывăр та кăткăс ĕç пулчĕ. Тĕртекен машинăсен каретисене тата ытти хăшпĕр пайĕсене улăштарма, мастерсемпе вĕсен помощникĕсене, ткачихăсене çĕнĕ йышши пир тĕртме вĕрентес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулчĕ. Çакна пула малтанхи вăхăтсенче фабрика продукци туса кăлармалли задание пурнăçласа пыраймарĕ.

Çак ытăва эпир коммунистсен пухăвĕнче сÿтсе яврăмăр. Коммунистсем плана тултарса пыманнин сăлтавĕсене, ĕçе лайăхлатмалли майсене кăтартса пачĕç. Производствăра хăйсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕç. Хăйсен ĕçри квалификацине пĕрмаях ÿстерсе пычĕç. М. Яшчалкина, З. Чекалова коммунистка-ткачихăсем çĕнĕ ĕçе хăвăрт вĕренсе çитрĕç, плана иртерсе тултарма пуçларĕç. Хăйсем ĕçлекен сменăсенче ытти ткачихăсене те ĕçе хăнăхтарса пычĕç.

Мастерсемпе вĕсен помощникĕсем пулса ĕçлекен А. Смирнова, А. Сюнева, Н. Бархатова, Г. Ситехмеева, И. Кошеев коммунистсем ткачихăсене çĕнĕ йышши пир тĕртме вĕрентес тĕлĕшпе нумай вăй хурса ĕçлерĕç. Вĕсем ткачихăсене куллен ĕçре вĕрентсе пыраççĕ, час-часах производствăлла канашлусем туса ирттереççĕ. Производствăлла канашлусенче фабрикăри стахановкăсен ĕçри опычĕсемпе паллаштаратпăр.

Пирĕн фабрикăра нормăна ирттерсе тултаракансем нумай. О. Дмитриева, А. Горшкова, Р. Варюхина, З. Ильĕчкина, Е. Ирзакова, Л. Смирнова т. ыт. чылай ткачихăсем ĕç нормине кашни уйăхрах 140—150 процент тултараççĕ. Ĕç хыççăн ирттерекен производствăлла канашлусенче вĕсем ĕç вăхăчĕпе мĕнле усă курни, ĕç нормине мĕнле майпа ирттерсе тултарни çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Производствăлла канашлусенче хамăр фабрикăра малта пыракансен опычĕсемпе кăна мар, çĕршыври ытти пир-авăр фабрикисенче ĕçлекенсен опычĕсемпе те паллаштаратпăр. Нумаях пулмасть «Правда» хаçатра Мускаври çип арлакан фабрикăри прядильщицăсен бригадирĕ Серафима Котовăн ĕç опычĕсем çинчен пичетленĕччĕ. Çак статьяна пур сменăсенче те сÿтсе яврăмăр, вĕсен ĕçри паха опычĕпе паллашрăмăр.

Фабрикăра стахановецсен шкулĕ ĕçлет. Шкула производствăра юлса пыраканĕсене хутшăнтарнă. Занятисене фабрикăри стахановкăсем ирттереççĕ. Вĕсем хăйсен опычĕпе паллаштараççĕ.

Фабрикăра стена хаçачĕ, цехра «молния» листовкăсем тухса тăраççĕ. Вĕсенче те фабрикăри стахановецсен опычĕсене анлăн сутататпăр.

Ĕçре ÿсĕмсем тăвасси рабочисем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе лайăх йĕркеленинчен нумай килет. Фабрикăра ĕçлекенсем валли час-часах лекцисемпе доклассем, каласусем ирттеретпĕр. Çак ĕçе коммунистсем активлă хутшăнаççĕ. Нумаях пулмасть А. Сюнева коммунистка рабочисене Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановленипе паллаштарчĕ. Браковщица М. Степанова коммунистка лайăх пахалăхлă продукци туса кăларасси çинчен доклад туса пачĕ. Хăйĕн докладĕнче çĕршыври паллă ткачихăсен опычĕсемпе паллаштарчĕ.

Фабрика директорĕ А. Хорошина, А. Смирнова, И. Кошеев коммунистсем те час-часах докладсемпе каласусем ирттереççĕ.

Парторганизаци ĕçне партире тăман актива та хутшăнтаратпăр. Çĕнĕ продукци туса кăларма пуçланă малтанхи кунсенчех хамăр фабрикăри партире тăман сменăри мастер помощникĕ пулса ĕçлекен Н. Статкевич юлташа çĕршыври тĕрлĕ хуласенчи пир-авăр фабрикисене ятăмăр. Вăл Орехово-Зуево, Иваново хулисенчи пир-авăр фабрикисенче пулса вĕсен ĕçĕнчи опытсемпе паллашрĕ. Унтан таврăнсан вăл çав фабрикăсенче ĕçлекенсен опычĕсемпе хамăр фабрикăра ĕçлекенсене паллаштарчĕ.

Пуçламăш парторганизаци туса ирттерекен çак пĕтĕм ĕçсем производствăлла плана уйăхран уйăха тултарса пыма, фабрика туса кăларакан продукци пахалăхне лайăхлатма май пачĕç. А. Сюнева коммунистка мастер пулса ĕçлекен смена иртнĕ уйăхри плана 105,3 процент, Г. Ситехмеева смени 104,6 процент тултарчĕç. Халĕ пирĕн фабрика коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕçре татах та пысăк ÿсĕмсем тăвассишĕн кĕрешет. Ăмăртăва коммунистсем пуçарса пыраççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçри паха тĕслĕхĕсемпе те, витĕмлĕ сăмахĕсемпе те фабрика коллективне ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарса пыраççĕ.

М. КОВАЛЕВА,
пир-авăр фабрикинчи пуçламăш парторганизаци секретарĕ.
Сĕнтĕр районĕ.

Хаçатсен страницисем тăрăх

Вĕсем колхоз производствине кайрĕç

Совет çыннисен патриотизмĕ вăйлă пулни çак кунсенче тепĕр хут палăрчĕ. Ялхуçалăх специалисчĕсем, ĕлĕкрех тĕрлĕ сăлтав пирки производствăра ĕçлеме пăрахнăскерсем, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хыççăн халĕ колхозсене ĕçлеме кайма кăмăл турĕç. Вĕсем, малта пыракан совет агрономийĕ вĕрентнипе анлă усă курса, социализмла ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе парти палăртнă программăна хăвăртрах пурнăçласшăн. Ялхуçалăх специалисчĕсем пекех чылай механизаторсем хăйсене МТС-сене ĕçлеме яма ыйтаççĕ. Вĕсем Тăван çĕршыв туса панă пуян техникăпа тулли усă курса ялхуçалăхне хăвăрт çĕклентерессшĕн. Парти чĕннипе хавхаланса ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторсем хăйсене ялхуçалăх производствине ĕçлеме яма ыйтса заявленисем пачĕç.

Районти хаçатсенчен нумайăшĕ ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторсен ырă кăмăлĕсем çинчен çырса пĕлтереççĕ. «Ленин ялавĕпе» хаçат (Куславкка районĕ) В. Мартынова агроном çырăвне пичетлет.

— Коммунистсен партийĕн чĕнĕвне ялхуçалăхĕнчи пур специалистсем те ырлаççĕ. Районти пур ялхуçалăх специалисчĕсемпе пĕрле эпĕ те пĕр-пĕр колхозра агроном пулса ĕçлеме кăмăл тăватăп. Партипе правительство мĕнле хушаççĕ, çавăн пек ĕçлеме пулатăп,—тет Мартынова юлташ.

— Манăн специальность—зоотехник. Аслă Отечественнăй вăрçăччен нумай вăхăт хушши эпĕ çак ĕçре пулнă,—тесе çырать хăйĕн заявленийĕнче Пантьăк лесничествинче (Хĕрлĕ Чутай районĕ) лесник пулса ĕçленĕ Ф Данилов юлташ.—Партин Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановленипе паллашнă хыççăн, эпĕ хамăн вырăн колхоза пулнине лайăх ăнлантăм. Мана колхоза ĕçлеме ярасса шанатăп. Пĕтĕм вăя пĕлĕве обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн пама пулатăп.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Çĕнтерÿ çулĕ» хаçат районти учрежденисенче ĕçленĕ ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторсем хăйсене колхозсемпе МТС-сене яма ыйтни çинчен пĕлтерет.

Мария Тургулева юлашки çулсенче кил хуçи хĕрарăмĕ пулса ĕçленĕ. Халĕ вăл Канаш районĕнчи «Красное знамя» колхозра зоотехник пулса ĕçлеме кайрĕ. «Коммунизмшăн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Совет Сарĕнчен таврăннă зоотехник Александр Петров Маленков ячĕпе тăракан колхозра ĕçлеме тытăннă.

Хаçат механизаторсен шухăш-кăмăлĕсем çинчен те пĕлтерет. Ĕлĕкрех трактор бригадин бригадирĕ пулса ĕçленĕ И. Борисов юлташ халĕ каллех МТС-ра ĕçлеме кăмăл тунă.

— Пирĕн тăван Коммунистсен партийĕ ялхуçалăхне малалла аталантарса пыма чĕннине эпĕ питех те пысăк хаваслăхпа кĕтсе илтĕм,—тет вăл.

Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаçат, ĕлĕкрех ялхуçалăх механизаторĕсем пулса ĕçленĕ специалистсем халĕ МТС-а каялла таврăнни çинчен пĕлтерет. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне МТС-а 18 механизатор пынă МТС дирекцийĕ вĕсене пурне те ĕçе вырнаçтарнă.

Социализмла ялхуçалăхне хăвăртрах малалла аталантарас тĕлĕшпе партипе правительство кăтартса панисем колхоз ĕçченĕсен производствăлла активлăхне çĕнĕрен вăйлатрĕç. Районти хаçатсем колхозниксен хастарлăхĕ ÿсни çинчен те сахал мар çыраççĕ.

Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» хаçат «Большевик» колхоз членĕ, комсомолец Василий Шетинин çырăвне пичетлет. Вăл çапла çырать:

— Халĕ, партипе правительство обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе ялхуçалăх ĕçченĕсем умне аслă задачăсем кăларса тăратсан, эпĕ хаваслансах фермăра ĕçлеме кусрăм. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне татăклăн ÿстерессишĕн кĕрешесси чыслă та ответлă тивĕç. Çавăнпа та эпĕ колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксене фермăсене масăллăн ĕçлеме кайма сĕнетĕп.

Комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче механизаторсем пулса ĕçлес кăмăл та пысăк. Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçат комсомолецсемпе çамрăксенчен нумайăшĕ хăйсене механизаторсен шкулĕсене яма ыйтни çинчен пĕлтерет. Пленум йышăннă постановлени çине ответлесе, теççĕ вĕсем, эпир механизаторсем пулма вĕренме каятпăр. Районта пурĕ 50 çынна яхăн механизаторсем пулма вĕренме тухса кайнă.

Хăйсене производствăна яма ыйтнă агрономсемпе зоотехниксем çак кунсенче колхозсенче ĕçлеме тытăнчĕç. Колхозра ĕç калăпăшĕ пысăк. Ĕçре йывăрлăхсем те пулма пултараççĕ. Анчах колхозсен малашлăхĕ вĕсене нимĕнле йывăрлăхран та хăратмасть. Çавăн çинчен «Колхоз хаçачĕ» (Элĕк районĕ) «За мир» колхоза ĕçлеме кайнă А Казакова зоотехник çырăвне пичетлет.

— Халĕ ĕнтĕ эпĕ пĕр эрнене яхăн колхозра ĕçлетĕп. Колхоз хуçалăхĕпе паллашрăм, бригадăсенче, фермăсенче пултăм, колхоз ĕçченĕсемпе курса каларăм. Кун хыççăн выльăх-чĕрлĕх работникĕсемпе, правлени членĕсемпе пĕрле производствăлла канашлу ирттертĕм,—пĕлтерет Казакова юлташ хăй ĕçĕнчи малтанхи утăмĕсем çинчен. Малалла вăл ĕçре мĕнле йывăрлăхсем пулассИ çинчен калать. Çапах та, эпĕ вăл йывăрлăхсенчен хăраса тăмастăп. Колхозниксемпе пĕрле çине тăрса ĕçлесен, парти кăтартса панисене пурнăçласа пырсан, эпир пысăк çитĕнÿсем тума пултаратпăр.

— Эпĕ хама шанса панă ответлă ĕçе чĕререн шанса туса пырăп Коммунистсен партийĕн, пĕтĕм колхозниксен шанăçне тÿрре кăларăп,—тесе вĕçлет Казакова юлташ хăйĕн çырăвне.

Наукăпа практика пĕрле тачă çыхăнни ялхуçалăх производствине хăвăрт çĕклентерме вăй парать. Çавна колхозниксем те лайăх пĕлеççĕ, колхоза пынă специалистсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ. Канаш районĕнчи «Коммунизмшăн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Шверник ячĕпе тăракан колхозра Л. Михеева агроном валли малтанах хваттер хатĕрлесе хунă. Специалистсен çемйисене кусарма колхозсенче лавсем уйăрса панă, хĕлле хутма вут-шанкă турттарса, выльăх-чĕрлĕх усрама апат уйăрса параççĕ.

Ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторсемшĕн партипе правительство тăрăшни тата колхоз ĕçченĕсем вĕсене ăшшăн кĕтсе илни малашне тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

Чĕререн ырă сунатпăр колхоз производствине ĕçлеме кусна ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторсене. Вĕсен ĕçĕсем ăнăçлă пулччăр, ырă шухăш-кăмăлĕсем туллин пурнăçланччăр.

ФЗО шкулĕсене вĕренме илмелли призыв

Совет халăхĕ коммунизм строительствин питĕ пысăк задачине ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Пирĕн Тăван çĕршывăн пур районĕсенче те мирлĕ хастарлă ĕç вĕресе тăрать. Çĕнĕ заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, электростанцисем ÿсе-ÿсе лараççĕ, хуласемпе рабочисен поселокĕсем лайăхланса пыраççĕ. Пирĕн промышленность, çĕнĕ техникăпа пуянланса, питĕ лайăх машинăсемпе агрегатсем, станоксемпе приборсем туса кăларассине ÿстерсе пырать. Совет çамрăкĕсем çав аслă ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем, ĕç резервĕсен шкулĕсемпе училищисене вĕренме кĕрсе, професси илме, Тăван çĕршывпа Совет государствине ытларах усă пама тăрăшаççĕ.

Промышленноçпа транспорт валли çамрăк рабочисем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе государствăн ĕç резервĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вунвиçĕ çул хушшинче ФЗО шкулĕсенче, ремесла тата чугун çул училищисенче квалификациллĕ рабочисем темиçе миллион вĕрентсе хатĕрленĕ. Иртнĕ çулхине кăна промышленноçа, транспорта, стройкăсене шкулсемпе училищесенчен квалификациллĕ çамрăк рабочисем 326 пин çын пынă.

Ĕç резервĕсен шкулĕсенче квалификациллĕ рабочисем вĕрентсе хатĕрлесси халăх хуçалăхĕн малашнехи аталанăвĕпе килĕшсе тăрать. Ĕç резервĕсен шкулĕсем промышленность, строительство тата транспорт валли чи кирлĕрех рабочисен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Ĕç резервĕсен шкулĕсем ялхуçалăхĕ валли механизаторсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçре те пысăк вырăн йышăнмалла. Çитес вăхăтра ФЗО шкулĕсенчен хăшпĕрисем МТС-сенче ĕçлеме кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме тытăнаççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви çамрăк рабочисем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе çав тери пысăка хурса хаклаççĕ. Çамрăксем хăйсемшĕн мĕнле тăрăшнине шкулсемпе училищĕсенче вĕренме тытăннă малтанхи кунсенчех туйса илеççĕ. Государство вĕсене апат-çимĕç, тумтир, учебниксем пĕр тÿлевсĕрех парать. Ремесла, чугун çул училищисенче тата ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсем пĕтĕмпех государство шучĕпе пурăнаççĕ.

Партипе правительство тăрăшнипе хавхаланса, совет çамрăкĕсем ФЗО шкулĕсемпе училищисене вĕренме тулли кăмăлпа каяççĕ. Унта вĕренсе, çамрăксем специальность илеççĕ, унтан вара Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

ФЗО шкулĕсенчен вĕренсе тухнă çамрăксенчен хăшпĕрисем, производствăна лайăхлатма май паракан пысăк çĕнÿсем панăшăн, Сталинла преми лауреачĕсен хисеплĕ ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Сталинла преми лауреачĕн ятне Юрий Ливов токаре, çĕр кăмрăк комбайнĕн машинисчĕсене Василий Кучерпа Порфирий Трефилова, Владимир Зубков сталеваре, Николай Телегин шахтера, Василий Вавжа машинист-вальцовщика тата ыттисене панă.

Чăваш республикинчи çамрăксем те ФЗО шкулĕсемпе училищисене вĕренме хаваслансах каяççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ халĕ Кемеровăпа Молотов облаçĕсенчи предприятисенче ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Вăрмар районĕнчен кайнă Георгий Яковлев, Алексей Игнатьев юлташсем сăрт-ту промышленность шкулĕнчен вĕренсе тухнă, халĕ шахтерсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем уйăхне 1.600-шер тенкĕ тата унтан ытларах та ĕçлесе илеççĕ. Калинино районĕнчен кайнă Федор Михухов, Михаил Скворцов юлташсем халĕ каменщиксем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем стахановецсем шутланаççĕ, 1.500 — 1.700-шер тенкĕ ĕçлесе илеççĕ.

Канашри чугун çул училищинчен вĕренсе тухнă çамрăксенчен нумайăшĕ халĕ вагонсем юсакан заводра стахановла ĕçĕн тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Çак училищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн Павел Светлова Уфари техникума вĕренме янă. Вăл çак училищĕрен пур предметсем тăрăх та питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Халĕ Светлов юлташ Канашри чугун çул училищинче мастер пулса ĕçлет. Çав вăхăтрах чугун çул транспорчĕн Мускаври институтĕнче заочно вĕренет.

Ноябрĕн 10-мĕшĕпе декабрĕн 20-мĕшĕ хушшинче Кемерово облаçĕнчи ФЗО шкулĕсемпе сăрт-ту промышленность шкулĕсене вĕренме илмелли призыв пулса иртмелле. Вĕренме 1936 тата 1937 çулсенче çуралнă, сывлăхĕпе çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсенче ĕçлеме юрăхлă çамрăксене илеççĕ.

Вĕсене Кемерово облаçĕнчи Сталинск тата Прокопьевск хулисенче вĕрентмелле пулать. Çамрăксене бетонщик, платник, штукатур, моторщик, забойщик, проходчик специальноçĕсене вĕрентмелле.

Парти, совет, комсомол, профсоюз организацийĕсен массăлла ăнлантару ĕçне анлăн сарса ямалла, çамрăксене шкулсенчи пурнăçпа вĕренÿ условийĕсем çинчен ăнлантарса памалла.

Районсенче ĕç резервĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен лекцисемпе доклассем, çамрăксемпе ФЗО шкулĕсенчен вĕренсе тухнă рабочисен тĕлпулăвĕсене ирттермелле.

Призыв ирттерĕ чухне иртнĕ çулхи йăнăшсене тумалла мар. Пĕлтĕр райсовет исполкомĕсемпе сывлăх пайĕсенчен хăшпĕрисем чирлĕ çамрăксене сыватас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман. Çавна пула хăшпĕрисем ФЗО шкулĕсемпе сăрт-ту промышленность шкулĕсенче вĕренме юрăхлă пулайман, вĕсен каялла таврăнма тивнĕ.

Ĕç резервĕсене вĕренме илмелли призыва ăнăçлă ирттересси—государствăн пысăк ĕçĕ. Ăна лайăх ирттерни çĕршыври рабочи класăн çĕнĕ те пултаруллă йышне вĕрентсе хатĕрлеме май парать.

З. ГОРДЕЕВА,
Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн сектор заведующийĕ.

Халăха кино кăтартас ĕçе лайăхлатмалла

Совет киноискусстви чи малта тăракан искусство пулса тăрать, вăл ĕçсыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн художествăпа документальнăй кинофильмсем ĕçсыннисен коммунизм строительствинче тунă пысăк çитĕнĕвĕсемпе паттăр совет халăхĕн пурнăçне тĕрĕс кăтартса параççĕ. Совет киноискусствинчи ăста мастерсем туса кăларнă произведенисем ĕçсыннисене Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн юратма вĕрентеççĕ, халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме тата ĕçсыннисене мир ĕçĕ çĕнтерессишĕн ытларах вăй хурса кĕрешме хавхалантараççĕ.

Пирĕн республикăри хуласемпе ялсенче халĕ 338 киноустановка ĕçлет Киноустановкăсен хисепĕ çултан-çул ÿснипе пĕрлех вĕсен пахалăхĕ те лайăхланса пырать. Кăçал республикăри хуласемпе ялсене çĕнĕ йышши — «Украина» тата «Киев» киноаппаратсемпе куçарса çÿремелли электростанцисем пурĕ 40 илсе килнĕ.

Хуласемпе ялсенчи кинотеатрсен шучĕ те куллен ÿссе пырать. Кăçал Шупашкарти «Родина» кинотеатра реконструкцилесе паха аппаратсемпе пуянлатаççĕ, Çĕрпÿпе Улатăрта çĕнĕ кинотеатрсем тăваççĕ, Канашпа Куславккари кинотеатрсене тĕпрен юсаççĕ. Хуласемпе ялсенче пысăк квалификациллĕ киноработниксен шучĕ те çултан-çул ÿссе пырать.

Республикăри нумай киноработниксем халăха кино кăтартас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Сăмахран, Улатăр районĕнчи киноработниксем, тăрăшса ĕçлесе, кăçалхи тăхăр уйăхри плана сеанссем енĕпе 109.4 процент, халăха кино курма явăçтарас енĕпе 119.2 процент тата кино кăтартса укçа пухмалли плана 105.4 процент тултарнă. Ялсенче ĕçлекен киномеханиксем М Гривин Ю Казнев тата В. Рузанин (Улатăр районĕ), А. Филиппов (Вăрнар районĕ), С. Константинов (Шупашкар районĕ) тата ыттисем те кино кăтартас ĕçе тăтăшах лайăхлатса пыраççĕ. Кун пек тĕслĕхсем республикăра сахал мар.

Анчах та аван ĕçлекен киномеханиксен опычĕпе пур киномеханиксене те паллаштарас тĕлĕшпе нимĕн те туман-ха.

Чăваш АССР Культура министерствипе Республикăри кинопрокат кантурĕ, çавăн пекех партин хăшпĕр райкомĕсем тата райсовет исполкомĕсем кино кăтартас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмаççĕ. Вĕсем киноработниксен ĕç дисциплинипе ответлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, киноработниксене политикăпа квалификаци тĕлĕшĕнчен ÿсе пыма тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ, киноработниксем хушшинчи социализмла ăмăртăва çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Республикăри хăшпĕр районсем халăха кино кăтартас ĕçпе питех те кая юлса пынине çакăнпа кăна ăнлантарса пама пулать.

Красноармейски, Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Советски, Муркаш, Сĕнтĕр тата Елчĕк районĕсем кино кăтартас плана уйăхран уйăха тултарса пымаççĕ. Ку районсем халăха кино курма явăçтармалли сентябрь уйăхĕнчи плана 23—33 процент, кино кăтартса укçа пухмалли плана 17—27 процент кăна тултарнă. Ку районсенчи хăшпĕр ялсенче 3—4-шар уйăх хушши кино кăтартман. Кăçалхи август уйăхĕнче Элĕк районĕнче 20 ялта, Красноармейски районĕнче 16 ялта тата Хĕрлĕ Чутай районĕнче 12 ялта кино кăтартман. Çав районсенчи шкул ачисене кино кăтартас ĕçе те йĕркелемен. Советски районĕнчи ялсене, сăмахран, кăçалхи 8 уйăх хушшинче шкул ачисене 180 киносеанс кăтартмалла пулнă пулсан, 16 сеанс кăна кăтартнă.

Ялсенчи киноустановкăсемпе тата кинопередвижкăсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ. 1953 çулхи январь—июнь уйăхĕсенче ялсенчи чылай кинопередвижкăсем тухăçлă ĕçлемен. Вĕсемпе 73 процент чухлĕ кăна усă курнă. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи кинопередвижкăсем 612 кун хушши ĕçлемесĕр ларнă.

Кинопередвижкăсем час-часах ĕçлемесĕр ларни вăл Чăваш АССР Культура министерстви кадрсене çителĕксĕр хатĕрленинчен, вĕсемпе ĕçлеменнинчен тата кино кăтартас ĕç çине вырăнти партипе совет органĕсем çиелтен пăхнинчен килет. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче 37 киномеханик кăна хатĕрленĕ. çав вăхăтрах 131 киномеханик ĕçрен тухнă

Паха техникăна ĕçе пĕлмен çынсене шанса парасси Культура министерствин йăлине кĕнĕ. Çак çитменлĕхе пула чылай çĕрте киноаппаратура çĕмĕрĕлсе пĕтет. Çапла пулсан та хăшпĕр районсенче киномеханиксен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ, техникăна вĕренес ĕçе йĕркелемен. Хĕрлĕ Чутай районĕнче паянхи куна тăватă киномеханик çитмест. Халĕ ĕçлекен 8 киномеханикрен иккĕшĕн кăна механикре ĕçлемелли правосем пур Çапла пулин те киномеханиксен квалификацине хăпартас, вĕсене техникăна вĕрентес тĕлĕшпе районти культура пайĕ кăçал нимĕн те туман.

Пирĕн совет çыннисен культура ыйтăвĕсем ÿсĕмĕсемĕн ÿссе пыраççĕ. Вĕсем кинокартинăсене те культурăлла кăтартма сĕнеççĕ Анчах уйрăм киномеханиксем ĕçсыннисен çак ыйтăвĕсене çителĕклĕ таран тивĕçтермеççĕ, кинокартинăсене начар кăтартаççĕ. Хĕрлĕ Чутайра киномеханик пулса ĕçлекен С. Михопаров юлташ сентябрĕн 17-мĕшĕнче «Адмирал Ушаков» фильма татăк-кĕсĕйĕн кăтартнă, сеанс вăхăтĕнче киноаппарата юсама 17 хутчен чарса лартнă. Елчĕк районĕнче «Марс» колхозри стационарлă киноустановкăн механикĕ Осипов юлташ август уйăхĕнче пĕр картинăна сыпăкăн-сыпăкăн ерне хушши кăтартнă. Кунашкал тĕслĕхсем республикăра татах та пур.

Халăха кино кăтартас ĕçри çитменлĕхсем киноаппаратсемпе кинолентăсене тирпейлĕ тыткаламаннинчен те килсе тухаççĕ. Республикăри кинопрокат кантурĕ (управляющийĕ Вишнев юлташ) юрăхсăра тухнă кинолентăсене вăхăтра юсама мерăсем йышăнмасть. Çапла вара хăшпĕр кинокописене юсамасăрах районсене яраççĕ.

Кинопрокат кантурĕ районсене директĕсемпе безымянкăсем çителĕклĕ ярса памасть. Çавăн пирки ĕнтĕ хăшпĕр ялсенче кино пуласси çинчен çынсем пĕлмесĕр юлаççĕ.

Кино кăтартас ĕçпе партипе комсомолăн чылай пуçламăш организацийĕсем тата ялти культурăпа çутĕç работникĕсем ытла та çителĕксĕр интересленеççĕ. Фильмсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. лекцисемпе доклассем вуламаççĕ, кино куракансен конференцийĕсене те ирттермеççĕ.

Республикăра киноаппаратсене юсас ĕç те çителĕклĕ вырăнта тăмасть Юрăхсăра тухнă киноаппаратсене вырăнта юсама районсенче кирлĕ хатĕрсем çук Çавăнпа та вĕсене пĕчĕк кăткăк пулсанах Шупашкарти «Чăвашкиноремснаб» мастерскойне кайса пама тивет, Анчах та ку мастерской аппаратсене начар тата нумай вăхăт хушши юсать. Хальхи вăхăтра çак мастерскойра 16 двигатель, 48 генератор тата ытти техника нумай выртаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчен кунта 6 генератор выртать, вăл шутран пĕрне 1952 çулхи июнь уйăхĕнче илсе килнĕ. Çавнашкалах кунта Куславкка, Елчĕк тата ытти районсенчен илсе килнĕ киноаппаратурăна юсассине кирлĕ пек организацилемен.

Чăваш АССР Культура министерстви тата хăшпĕр райисполкомсем халăха кино кăтартма лайăх условисем тума çителĕклĕ мерăсем йышăнмаççĕ, чылай вулав çуртĕсемпе ялти клубсене тата кинотеатрсене ку таранччен те юсаса çитермен. Вĕсене хĕл вăхăтĕнче хутса ăшăтма вутă çителĕклĕ хатĕрлемен.

Султе асăннă çитменлĕхсене пĕтермесĕр халăха кино кăтартас ĕçе лайăхлатма май çук. Çавăнпа Чăваш АССР Культура министерстви. КПСС хула тата район комитечĕсем, хула тата район Совет исполкомĕсем кино кăтартас ĕçе лайăхлатассишĕн ытларах тăрăшни кирлĕ. Кинофикаци работникĕсен ĕçне кулленех тĕрĕслесе пырса, вĕсене кирлĕ пулăшу памалла, кинофикаци кадрĕсене хатĕрлес тата вĕсене воспитани парас ĕçе татăклăн лайăхлатмалла, паха тĕслĕхсем кăтартакан киномеханик опычĕсене пĕтĕçтерсе анлăн сармалла, киноработниксем хушшинчи социализмла ăмăртăва куллен-кун вăйлатса пымалла, кашни киноустановка тăрăх плана уйăхран уйăха тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн кĕрешмелле.

Художествăлла кинокартинăсене кăтартнипе пĕрлех ялхуçалăх наукине, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе опычĕсене пропагандăлакан кинофильмсене нумайрах кăтартмалла.

Çак кунсенче пирĕн республикăра «Ылтăн Çăлтăр Кавалерĕ» тата 9-мĕш номерлĕ «Новости сельского хозяйства» (çĕрулми, купăста тата, кукуруза культурисене тăваткал тĕмĕн лартмалли меслетсем çинчен) кинокартинăсем кăтартаççĕ. Çак кинофильмсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьте пулса иртнĕ Пленумĕ йышăннă решенисене колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çакна шута илсе, сеанссем умĕн ялхуçалăхĕнчи опытлă специалистсен вăйĕпе доклассемпе лекцисем тата кино куракансен конференцийĕсене ирттермелле.

Кино кăтартассине лайăхлатас ĕçре радио тата пичет пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ Хаçатсен тата радион ĕçсыннисене çĕнĕ фильмсен содержанийĕсемпе паллаштармалла.

Кино—ĕçсыннисене коммунизмла воспитани памалли хăватлă та пысăк вăй пулса тăрать, коммунизмшăн кĕрешес ĕçре массăсен культурипе политикăлла пултарулăхне çĕклеме пулăшать. Кино кăтартас ĕçе ялта та, хулара та татăклăн лайăхлатмалла.

В. АВДЕЕВ,
КПСС Чăваш обкомĕн агитаци секторĕн заведующийĕ.

ШУПАШКАРТИ ÇĔНĔ СТРОЙКĂСЕНЧЕ

Пĕлтĕр кирек хăçан Шупашкарти пулас çĕнĕ стройкăсен — педагогика, ялхуçалăх институчĕсен, больница хулин, хулакинисен çурчĕн, пурăнмалли чылай çуртсен, çĕнĕ скверсен проекчĕсем пичетленсе тухнăччĕ.

— Ытла та аван, илемлĕ çуртсем пулмалла, хăçан тăвассĕ-ши вĕсене,—тесе ыйтатчĕç çавăн чухне вулакансем.

...Авă эпир пасни чугун çулпа Шупашкар станцине çитетĕр. Илемлĕ автобус çине ларса хулана каятăр. Асфальт сарнă шоссе çулĕ çине тухсанах сирĕн умра йĕркерен ларса тухнă икĕ хутлă чул çуртсем курăнса каяççĕ. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... пилĕк çурт. Хăш вăхăтра ÿссе ларнă вĕсем? Нумаях пулмасть çак вырăнта кĕтÿ çÿретчĕ е çĕрулми ларса тăратчĕç. Халĕ авă, мĕн, тери пысăк çуртсем унта!

Çуртсем тĕлне çитсен автобус чарăнать.

— Бешноволоцка! Кăмăн анмалла, анăр,—пĕлтерет кондуктор.

Çакăнта автобус çине строительствăра ĕçлекен вуншар рабочисемпе работницăсем лараççĕ.

Пĕлтĕр, станцăран тухсан, хулана çитиччен автобус нисăта та чарăнман. Халĕ çакăнта кашни автобус чарăнать. Кунти строительсем пурăнмалли тата административлă çуртсем тăваççĕ. Халĕ çуртсене тул енчен штукатурлама тытăннă. Çав вăхăтрах шалти ĕçсене тăваççĕ. Юнашарах çĕнĕ çуртсен никĕсĕсене хываççĕ. Кунта строительсем валли апатçимĕç, промышленность таварĕсем сутмалли лавкасем уçнă.

Шупашкар хулипе чугун çул станцийĕ хушшинче строительство ĕçĕсем пыраççĕ. Часах станци хулапа пĕрлешсе унăн пайĕ пулса тăрĕ...

Шоссе çулĕн сулахай енче, йывăç карта варринче пĕр хутлă, илемлĕ çурт. Ăна çак кунсенче кăна туса пĕтернĕ. Ку Главкинопрокатăн кинофильмсен базиĕ. Кунта пысăк та çутă залра кинофильмсене юсамалли мастерской, кинокартинăсене пăхса тĕрĕслемелли зал тата ыттисем те пур. Базăна çĕнĕ йышши аппаратсемпе пуянлатнă.

Карл Маркс урамне пырса кĕретпĕр. Урам вĕçĕнче пĕр вăхăтрах виç-тăватă хутлă темиçе çурт туса пĕтереççĕ.

Ремесла училищин çурчĕ калăпăшĕпе Советсен çуртĕнчен кăшт кăна пĕчĕкрех. Ăна тума 1.550 пин ытла кирпĕч кайнă. Çак çурт, пĕрремĕшне туса пĕтерсен, шалтан та тултан та илемлĕ пулмалла. Халĕ строительство ĕçĕсем шалти пÿлĕмсенче пыраççĕ. Тимĕрпе бетон ĕçĕсене пĕтĕмпех туса пĕтернĕ. Хутса ăшăтмалли хуранĕсене вырнаçтарса лартнă. Çĕнĕ çурта шыв кĕртме 100 метр пăрăх хывнă, 300 метр канализаци тунă.

Урайне сарма 1.100 тăваткал метр паркет тата тĕрлĕ тĕслĕ асфальт плиткисем 1.200 тăваткал метр илсе килнĕ. Çак кунсенче штукатур ĕçĕсене туса пĕтерсе урай сарма тытăнаççĕ.

Çуртпа пĕрле строительствăра ĕçлекенсем те ÿсеççĕ. Малтанхи вăхăтра нимĕнле специальность çук рабочисем вĕренсе икшер е виçшер специальность тупнаççĕ. Чăваш хĕрачи Ф. Степанова пур ĕçе те ăста тума пултарать. Вăл бетонщик, штукатур, кирлĕ пулсан начар мар арматурщик. Ф. Степановăна строительствăра чи ответлă ĕçсене шанса параççĕ. Юлашки кунсенче вăл çуртăн фасадне илемлетес тĕлĕшпе ĕçлерĕ. Çак ĕçе вăхăтра тата питĕ лайăх турĕ.

Н. Федотов юлташ строительствăра малтан плотник пулса ĕçленĕ. Халĕ вăл электросварщик, ăста механик.

Вета штукатур Д. Цепелев юлташ сакăр çынна хăй юратнă специальноçа вĕрентнĕ. Халĕ вĕсем пурте çак строительствăрах ĕçлеççĕ. Строительство коллективĕ пĕр вăхăтрах 24 хваттерлĕ пурăнмалли çурт тăвать.

РАБОЧИСЕМ ВАЛЛИ

Ремесла училищипе хирĕçех пĕлтĕр кĕркунне тепĕр çĕнĕ строительство пуçланчĕ. Часах кунта çĕнĕ техника тăрăх тунă механизмсем илсе килчĕç. Хулари строительствăра малтанхи хут хăватлă кранпа усă курма тытăнчĕç. Халĕ çак вырăнта тăвата хутлă çурт ÿссе ларчĕ. Ку — электроаппаратура заводĕнче ĕçлекен рабочисен общежитийĕ. Унта 200 çын пурăнмалла.

Çуртăн кашни хутĕнче кухньăсăр пуçне хĕрлĕ кĕтессем, илемлĕ вестибюльсем пулаççĕ. Кунта пурăнакансен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерме çак çуртрах парикмахерски, атă-пушмак тата кĕпе-тумтир юсамалли мастерскойсем уçаççĕ.

Халĕ строительство ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Хутса ăшăтмалли хатĕрсене пĕтĕмпех вырнаçтарса çитерне. Водопроводпа канализаци кĕртнĕ.

Строительсем — каменщик-и вăл е плотник — пурте кунта хăватлă кранпа ĕçлекен Б. Гусанов, Н. Шайхулина тата З. Алексеева юлташсене хисеплесе асăнаççĕ. Вĕсем механизма лайăх, пĕр чарăнмасăр ĕçлеттереççĕ. Кирлĕ материалсене кирек ăста пулсан та вăхăтра парса тăраççĕ.

Тăваттăмĕш хута хăпарса балкон çине тухатпăр. Кунта хĕрсем юрла-юрла ĕçлеççĕ. Çуртăн фасадне тĕрлĕ капительсемпе илемлетеççĕ. Хулари чи ăста лепщик, 7-мĕш разрядри каменщик А. Коровинпа унăн помощници Рая Харасккина кронштейнсене вырнаçтарса лартаççĕ.

— Мĕншĕн-ха «1952» лартатпăр. Çурта кăçал туса пĕтернĕ-çке,—тет Рая Харасккина.

— Çурта хăçан туса пĕтернине мар, унăн никĕсне хăçан хывнине палăртăваççĕ,—ответлет ăна лепщик.

Штукатурсен ĕçĕ кулленех çăмăлланса пырать. Çĕнĕ механизмсем йывăр ĕçсене çăмăллатаççĕ. Çак строительствăра цемент шĕвекне механизм вăйĕпе—насоспа сапаççĕ. Шĕвеке алă вăйĕпе йăтса пыма кирлĕ мар, вăл мотор вăйĕпе, пăрăхпа тăрăх пырать. Кунта моторист пулса Рая Шиверова ĕçлет. Çĕнĕ техникăна вăл хăвăрт вĕренсе çитнĕ.

Çĕнĕрен тăвакан çуртсене пĕринчен теприне илемлĕрех тума тăрăшаççĕ. Çак çурта илемлетес тĕлĕшпе чăваш скульпторĕ И. Ф. Кудрявцев юлташ ĕçлет. Çурта илемлетмелли япаласем тума ятарласа мастерской уçнă.

Сывăх кунсенче çак çурта икçĕр рабочи пурăнма куçать.

Сывăхрах 24 хваттерлĕ виçĕ хутлă çурт туса пĕтернĕ. Унта çитес кунсенчех рабочисем пурăнма куçмалла. Ку çуртра кашни çемье валли икĕ-виçĕ пÿлĕм.

Общежитипе юнашар çĕнĕ поликлиника никĕсне хываççĕ. Вăл та виçĕ хутлă чул çурт пулать.

ИНСТИТУТСЕН ÇУРЧĔСЕМ ÿСЕÇÇĔ

Пĕлтĕр хаçатра Шупашкарти педагогика тата ялхуçалăх институчĕсен пулас çурчĕсен проекчĕсем пичетленсе тухсан, чылай çамрăксем унта вĕренме хавасланчĕç. Çавăнпа çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçлансан студентсем институтсен çĕнĕ çурчĕсене тунă çĕре пычĕç.

— Эпир телейлĕ, çак пысăк та илемлĕ çуртра вĕренĕр ĕнтĕ,—теççĕ педагогика институтĕнче юлашки курсра вĕренекенсем кăçал кĕнĕ студентсене.

— Чăн, эпир унта вĕрентпĕрех. Авă, мĕн чухлĕ ÿсĕ вăл, кĕçех виççĕмĕш хутне купаласа çитереççĕ,—теççĕ вĕçĕнрех курссенче вĕренекенсем. Строительсем хаваслăн ĕçлени, институтăн вĕренмелли корпусĕ ÿссе пыни вĕсене чĕререн савăнтарать. Кашни студент çак çуртăн пысăк та аслă аудиторийĕсенче вĕренме ĕмĕтленет.

Педагогика институчĕн çĕнĕ çуртне тăвас ĕç кăçал çулла вăйланчĕ. Строительство гектар çурă çĕр лаптăкĕ йышăнать. Кунта пурĕ 13 тĕрлĕ механизм—бетон шĕвекĕ тăвакан машинăсем, экскаваторсем, крансем пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Халĕ çуртăн виççĕмĕш хутне купалаççĕ. Кунта, çÿлти хута, кирпĕч, ытти тĕрлĕ строительство материалĕсем парса тăрас ĕçе пĕтĕмпех механизацисленĕ. Çак кунсенче пысăк кран ĕçлеме пуçларĕ. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче виçĕ пин кубометр чухлĕ çĕр ĕçĕ, 600 кубометр чухлĕ тимĕрпе бетон ĕçĕ тунă.

Строительствăри каменщиксен бригадине хулари нумай çуртсене купаланă Ф. Постаушкин юлташ ертсе пырать. Бригада сменăри задание яланах 140—145-шер процент пурнăçласа пырать. Уйрăм каменщиксем — В. Маренков, К. Сафайлов, А. Козлов тата ыттисем те 180—185-шер процент пурнăçлаççĕ. Пĕр вăхăтрах строительство материалĕсем перекетлес тĕлĕшпе те паха тĕслĕх кăтартаççĕ.

А. Рогожников юлташ ертсе пыракан плотниксен бригади çак строительствăна киличчен йывăç çуртсем тунă çĕрте ĕçленĕ. Малтанлăха ĕç ăнăçлах пыман вĕсен, вăрах ĕçленĕ. Ялхуçалăх институтне тăвакансемпе ăмăртса ĕçлеме тытăнсан, ĕç палăрмаллах лайăхланнă. Халĕ вĕсем пĕр браксăр ĕçлеççĕ, задание ытлашшипех пурнăçласа пыраççĕ.

... Инçех те мар ялхуçалăх институчĕн çĕнĕ çуртне тăваççĕ. Вăл та пĕр вăхăтлалах ÿссе пырать. Кунта та чылай ĕçсене механизмсен вăйĕпе тăваççĕ.

Институтăн студентсем пурăнмалли общежитие пĕтĕмпех туса пĕтернĕ ĕнтĕ. Вăл илемлĕ те пысăк çурт. Кăçал унта пур хучĕсенче те студентсем пурăнаççĕ.

Карл Маркспа Володарски урамĕсенчи кĕтесри пĕр пурăнмалли çурт халиччен хулара чи пысăккисенчен пĕри пулнă. Пĕлтĕр çак çуртпа юнашар 38 хваттерлĕ çурт тума тытăннăччĕ. Ăна халĕ туса пĕтересçĕ ĕнтĕ. Çитес кунсенчех кунта темиçе çемье пурăнма куçать.

Атăл хĕрринелле кайнă чухне эсир Театральнăй урамра çĕнĕ сквер куратăр. Ăна кăçал çуркунне туса пĕтернĕ. Унăн икĕ енне хитре тимĕр карта тытнă, йывăçсем ларса ÿстернĕ, чечек йăранĕсем тунă. Пăхма илемлĕ, савăнăçлă.

«Родина» кинотеатра çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе кăçал пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Театр çурчĕн фасадне тĕпренех пăсса çĕнĕрен тунă. Кунта концертсем кăтартмалли, лекцисем ирттермелли зал, вулamалли, тĕрлĕ вăйăсем ирттермелли уйрăм пÿлĕмсем, буфет тата ыттисем те пулаççĕ. Театр çуртне шалтан илемлетеççĕ, çĕнĕ сĕтел-пукансем лартаççĕ. Кино кăтартас ĕçе лайăхлатас майпа çĕнĕ, паха йышши аппаратсем вырнаçтараççĕ. Кино курма пыракансене лайăх канма пур условисем те çителĕклĕ пулать.

Хула ÿсет, илемленет. Кивĕ çуртсем те çĕнĕ тум тăхăнса хулана çĕнĕ сăн кĕртеççĕ. Çавăн пек çуртсене кашни урамра, кашни кварталта куратăн. Республика столици — Шупашкар, çĕршыври ытти пысăк хуласем пекех, сулсерен илемленсе, унăн çыннисен пурнăçĕ лайăхланса, культурăланса пырать. Çакă совет çыннисене тата лайăхрах ĕçлеме чĕререн хаваслантарса чĕрĕ вăй хушать.

Н. МИНИН.

Шупашкарта педагогика институчĕн çĕнĕ çуртне тăваççĕ. **ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ:** строительство панорами.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Медицина пулăшăвĕ парас ĕçе çĕнĕлле йĕркелесси çинчен

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх ырлăхĕшĕн пĕрмаях хытă тăрăшни пирĕн çĕршывра сывлăха сыхлас ĕç тăтăшах вăйланса пынинче те уççăн палăрса тăрать. ССР Союзĕнче больницăсем, ача суратмалли çуртсем, фельдшерпа акушер пункчĕсем, ача яслисем нумай. Вĕсен шучĕ çултан-çул ÿссе пырать. Медицина учрежденийĕсем хамăрăн Тăван çĕршывра туса хатĕрленĕ оборудованипе пуян. Медицина шкулĕсенчен çулсеренех врачсем, фельдшерсем, сестрасем тата ытти специалистсем нумай вĕрентсе кăлараççĕ.

Совет медицини наукине, тĕнчере чи малта пыракан наукăна аталантарса, медицина науки учрежденийĕсен работникĕсем юлашки вăхăтра чир-чĕртен сыватма тата чирлессине малтанах сирсе яма çĕнĕ меслетсем нумай тупрĕç. Çавăн пек çĕнĕ меслетсенчен пĕри—диспансеризаци меслечĕ. Ку меслет тăрăх предприятире ĕçлекен е ялта пурăнакан мĕнпур çынсен сывлăхне тĕрĕслеççĕ, камăн мĕнле чир пуррине палăртаççĕ, чирлисене шута илеççĕ, унтан вĕсене чир-чĕртен сыватма тытăнаççĕ. Çавăн чухнех камăн сывлăхĕ мĕнлине, вăл ăçта тата мĕнле ĕçре ытларах усăллă пулма пултарнине палăртаççĕ, çав ĕçе вырнасма канаш параççĕ çапла майпа сывлăха сыхлама пулăшаççĕ.

Кам чирлине унăн чирĕ пуçланнă вăхăтрах палăртнипе, çав çынна чир вăйланма пултарасси çинчен вăхăтра асăрхаттарнипе, сиенчĕх пулăшнипе сывлăха сыхлас ĕçе наука вĕрентнĕ пек йĕркелеме пулать.

Ялсенче диспансеризаци меслечĕпе ĕçлессине чи малтан Житомир облаçĕнчи Чудново районĕнчи врачсем пуçарнă. Çав меслетпе ĕçлесси юлашки вăхăтра пирĕн республикăра та анлă сарăлчĕ.

Халиччен промышленность предприятийĕсенче диспансеризаци меслечĕпе ĕçлениччен çакă палăрă пулчĕ: предприятири пур рабочисемпе служащисен сывлăхне тăтăшах тĕрĕслесе тăни чирлĕ çынсене хăвăртрах сыватма пулăшать. Çыннăн сывлăхĕ упранать. Вăл производствăра ăнăçлă ĕçлет. Çакă вара предприятире ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать.

Çавăн пекех пĕр-пĕр ялти мĕнпур çынсен сывлăхне сăнаса тăни, чирлисене вăхăтра медицина пулăшăвĕ пани колхоз ĕçченĕсен сывлăхне тĕреклетме май парать. Çирĕп сывлăхлă çынсем производствăра тухăçлă ĕçлеççĕ. Колхозăн кашни членĕ, кашни тракторист, кашни комбайнер хастарлă ĕçлени колхозсен общественлла пуянлăхне нумайлатма чи кирлĕ услови пулса тăрать.

Чăваш республикинче çирĕм районта халăхăн сывлăхне тĕрĕслесе тухнă, чирлисене шута илнĕ, сыватма тытăннă. Чирлеме пуçлани палăрнă çынсене çĕн чир тарăна каяссинчен сыхланма вĕрентнĕ. Пĕр-пĕр ĕçре ĕçлени çын сывлăхĕшĕн сиенлĕ пулма пултарсан, çав çынна урăх ĕçе куçарнă. Çапла майпа — диспансеризаци меслечĕпе ĕçленипе кура нумай çынсене сыватнă. Çак ĕçсене тунă май колхозниксем хушшинче ĕçкунĕсен минимумне тултарманнисен шучĕ икĕ хут чакнă, чирленипе ĕçе тухайманнисем те сахалтарах пулаççĕ. Тĕрĕсленĕ чухне чирлĕ пулни палăрнă çынсенчен 10 процентне больницăсем майĕпен сыватма учета илнĕ.

Анчах чылай районсенче, Сăмахран, Тăвай, Первомайски, Шăмăршă, Йĕпреç районĕсенче, медицина работникĕсем те, вырăнти Советсен руководителĕсем те ялти мĕнпур ĕççыннисен сывлăхне тĕрĕслесе тăхас ĕçе хакламаççĕ. Вĕсем ялти ĕçченсен сывлăхне вăхăтран вăхăта тĕрĕслесе тăрас ĕçе организацилеме сахал тăрăшаççĕ.

Сывлăха сыхлас ĕçре малта пыракан, прогрессивлă меслетсене хакламанни пулмалла мар. Диспансеризаци меслечĕпе ĕçлессине пур районсенче те анлă сармалла. Çак ĕçе сывлăха сыхлас ĕç органĕсен оперативлă тата конкретлă ертсе пымалла. Ку ĕçе ăнăçлă пурнăçласа пырасси медицина работникĕсене райисполкомсемпе ял Совечĕсем тата колхозсен, совхозсен, машина-трактор станцийĕсен руководителĕсем активлă пулăшса пынинчен килет.

Диспансеризаци енĕпе районти организацисемпе ял Совечĕсем, колхоз правленийĕсем, МТС-сен руководителĕсем мĕн тумаллипе республикăри Сывлăх министерствин тата Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин тĕплĕн кăтартса парас пулать.

Диспансеризаци медицина ĕçĕнчи меслет пулса тăрать, профилактика вара чир-чĕртен сыхланма мĕн тумаллине ăнланса илме пулăшать. Чир-чĕртен сыватнипе пĕрлех, çынсене чиртен сыхланма вĕрентмелле.

Çынна чиртен сыватас тĕлĕшпе кăна ĕçлени совет врачĕшĕн çителĕксĕр, унăн çынсене чир ересиннчен тата чир тарăна каяссинчен вăхăтра асăрхаттармалла, сывлăха сыхлама усăллă канашсем памалла.

Ĕççыннисене сывлăха çирĕплетме пулăшасси — медицина работникĕсен пархатарлă тивĕçĕ. Вĕсен хăйсем умĕнче тăракан пысăк ĕçе чыслăн пурнăçласа пымалла, ĕçре совет медицини наукин çитĕнĕвĕсемпе анлăн усă курмалла.

П. ОСИПОВ,
РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ, медицина наукисен кандидачĕ.

Колхозсен[illegible] çĕнĕ çуртсем

КУСЛАВККА. Районти чылай колхозсем строительство ĕçне вăйлатса пыраççĕ, çĕнĕ витесем туса лартаççĕ. Тĕрлемесри «Коммунар» колхоз шлакпа бетонран 500 чăх-чĕп усрама стандартлă вите туса лартрĕ. Витене черепицăпа витнĕ. Çавăн пекех «Дружба» колхозра чăхсем хупмалли, «Динамо» колхозра хурсем хупмалли витесем туса пĕтернĕ.

«Правда» колхозри строительство бригади кăçал автомашинăсем валли гараж тата 140 сысна усрамалли стандартлă вите туса лартнă.

«Алга», Чапаев ячĕпе тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче те сысна витисем тăвасси ăнăçлă пырать. «Победа», «Красная Волга» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем лаша витисем туса пĕтереççĕ.

Т. ИВАНОВ,
(Хамăр корр.).

Вăрман промышленноçĕ юлса пынине хăвăртрах пĕтерессишĕн

Шупашкарта ноябрĕн 2-мĕшĕнче вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен работниксен активĕн республикăри пухăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура «Вăрман промышленноçĕ юлса пынине пĕтересси çинчен» КПСС Чăваш обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕ П. Чичикин юлташ доклад туса пачĕ.

— Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ,—тет докладчик,—вăрман промышленноçĕ халăх хуçалăхĕн ÿсее пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пынине пĕтерме, йывăç хатĕрлес ĕçе сезонпа туса пырассине сахаллатма, пур ĕçсене те комплексла механизацилессине малалла аталантарма, производствăна организацилессине тата механизмсемпе усă курассине лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме хушса хăварчĕ.

Съезд решенийĕсене пурнăçласа, партипе правительство вăрман промышленноçне малалла аталантарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Вăрманпромхозсем малта тăракан техникăпа хĕçпăшалланаççĕ, рабочисем валли тухăçлă ĕçлеме лайăх пурăнма паха условисем тăваççĕ. Анчах çав майсемпе республикăри вăрман промышленноçĕнче лайăх усă кураççĕ. Чылай ĕçсене механизацилени пулин те, ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ, йывăç хатĕрлессин хăйне харакан хакĕ пысăк.

Вăрман промышленноçĕ юлса пынин тĕп сăлтавĕсем çаксем пулаççĕ: вăрманпромхозсем ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курмаççĕ, чылай рабочисене хушма ĕçсем тутараççĕ, хăватлă механизмсем час-часах ахаль лараççĕ, оборудованине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсамаççĕ. Ăста рабочисем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе йĕркелемен. Хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем механизмсемпе усă курассине хаклаççĕ. Вăрман промышленноçĕнче условисем уншăнах, çавна май пур ĕçе те çĕнĕлле йĕркелеме, производство культурине ÿстерме кирлине ăнланмаççĕ. Тепĕр чухне ситтевлĕ вăйпур процессене те механизацилесе çитермени. Турат иртес, пĕренесене шуратас ĕçе пачах механизацилемен. Вăрманпромхозсенче рабочисем час-часах улшăнаççĕ.

«Чувашлес» трест каснă йывăçа турттарса кăлармалли плана çултан-çул тултармасть. Кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче каснă йывăçа турттарса кăлармалли плана пурĕ 86 процент, вăл шутран механизмсемпе турттарса кăлармалли плана 81,5 процент çеç тултарнă.

Трест вăрманпромхозсене çителĕксĕр ертсе пырать, çĕнĕ техникăпа туллин усă курма тăрăшмасть. Унти чылай специалистсем вырăнта сахал пулаççĕ, государство çирĕплетсе панă плана тултарса пымалла тăвас тĕлĕшпе хăйсен пуçарулăхне кăтартмаççĕ. Республикăра техникăна алла илнĕ, шалти резервсемпе туллин усă курма пĕлекенсем сахал мар. Сăмахран, Çĕмĕрле тата Вăрнар вăрманпромхозĕсем йывăç турттарса кăлармалли тăхăр уйăхри плана ăнăçлă пурнăçланă. Сысуйкин, Вельдяев трактористсем тата ыттисем те тăтăшах паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Анчах трест вĕсен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сарма кирлĕ мерăсем йышăнмасть. Уйрăмах Пăрачкав, Приволжски, Шăмăршă, Бунински, Йĕпреç вăрманпромхозĕсем юлса пынине палăртас пулать. Вĕсем йывăç турттарса кăлармалли тăхăр уйăхри плана 57—78 процент кăна тултарнă.

Трест ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана çулсерен тултараймасть. Хăшпĕр процессем тăрăх вара ĕç тухăçлăхĕ ÿсес вырăнне чакать. Кадрти рабочисенчен 40—45 проценчĕ, вăхăтлăха ĕçлеме пынă колхозниксенчен 80—98 проценчĕ нормăсене тултарса пыраймасть.

Вăрман промышленноçĕнче усă курман резервсем нумайăшне çакăнтан уççăн курма пулать: кăçал трест кашни рабочи пуçне куллен вăтам шутпа 0,59 кубометр йывăç турттарса кăларнă. Малта пыракан вăрманпромхозсенче пĕрер кубометр е ытларах та турттарса кăлараççĕ. Трестра пурĕ 7 пин ытла рабочи ĕçлет. Кашни вунă рабочи пуçне куллен пĕрер кубометр ытларах турттарса кăларсан та трест çулталăкра халăх хуçалăхне виççĕр пин кубометра яхăн йывăç хальхинчен ытларах хатĕрлесе пана пулĕччĕ.

Уйрăм хуçалăхсен руководителĕсем механизмсене татти-сыпписĕр ĕçлеттерме тăрăшмаççĕ. Первомайски вăрманпромхозĕнче тăватă кран пур, анчах вĕсемпе туллин усă курмаççĕ.

Пăрачкав, Алтышево, Приволжски вăрманпромхозĕсенче автомашинăсем, тракторсем тата ытти механизмсем час-часах ахаль лараççĕ. Нумай вăрманпромхозсенче оборудование вăхăтра тата паха юсамаççĕ. Улатăрти центрально-ремонтнăй мастерской (ЦРМ) япăх ĕçлет, плана тултарса пымасть, автомашинăсемпе тракторсене вăхăтра юсаса памасть.

Касса хатĕрлекен йывăçран нумайăшне автомашинăсемпе турттарса кăлараççĕ. Шоферсем тухăçлă ĕçлесси çулсен пахалăхĕнчен, çĕнĕ çулсем ытларах тунинчен нумай килет. Анчах трест çĕнĕ çулсем тума уйăрса паракан укça-тенкĕпе çулсеренех усă курмасть. 1950 çулта 19 километр тăршшĕ çĕнĕ çул тунă пулсан, 1952 çулта 9,8 километр тăршшĕ çеç тунă. Кăçал та ку ĕç япăх пырать. Çĕнĕ çулсем тума, киввисене юсама тăрăшманнипе ĕнтĕ вăрманпромхозсем çуркунне тата кĕркунне йывăç турттарас ĕçе вăйсăрлатаççĕ. Чылай вăрманпромхозсем çулсене хĕле хатĕрлесе çитермен.

Докладчик тата прениве тухса калакансем çакна палăртрĕç: механизмсемпе туллин усă курасси кадрсенчен, вĕсем техникăна алла илнинчен, ертсе пыракан работниксем хăйсен пĕлĕвĕсене ывăнма пĕлмесĕр ÿстерсе пынинчен килет. Нумай вăрманпромхозсенче рабочисене техникăна вĕрентес, малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе çарас ĕçе йĕркелемен. Хăшпĕр ертсе пыракан работниксем хăйсем те çĕнĕ техникăна пĕлмеççĕ.

Улатăрта механизаторсем вĕрентсе хатĕрлекен курс пур. Ун начальникĕ Пинечкăй юлташ ăста кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме кирлĕ пек тăрăшмасть. Курсра çĕнĕ машинăсемпе механизмсем, нагляднăй пособисем çителĕксĕр. Малашне çак курс вырăнне училище уçаççĕ. Унта пĕр çулталăк вĕренмелле пулать. Курсантсене стипенди памалла. Училищĕре лайăх вĕренме пур майсене те тăваççĕ.

Тăван çĕршыв умĕнче тăракан хуçалăхпа политикăлла задачăсене вăхăтра пурнăçласа пырасси вăрман промышленноçĕ ăнăçлă ĕçленинчен нумай килет. Халĕ, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăхăн пурнăçĕпе культурине татăклăн лайăхлатмалли, социализмла ял хуçалăхне малалла хăвăрт аталантармалли программăна пурнăçласа пынă тапхăрта, вăрман промышленноçĕн халăх хуçалăхĕнчи пĕлтерĕшĕ тата ытларах ÿсет. Халăха кирлĕ таварсем, ялхуçалăх машинисем туса кăларма, çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем, пурăнмалли çуртсем, шкулсем лартма, чугун çулсем хывма çĕршыва пĕрене, хăма, шпал тата ытти йывăç материалсем нумайрах та нумайрах кирлĕ. Çакна вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен яланах асра тытмалла, партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçлама вăя шеллемесĕр ĕçлемелле.

Рабочкомсем, вăрманпа сулă работникĕсен профсоюз обкомĕ социализмла ăмăртăва конкретлă, оперативлă ертсе пымаççĕ, рабочисен пурнăçпа йăла тата культура условийĕсене лайăхлатма тăрăшмаççĕ.

Республикăри вăрман промышленноçĕ юлса пынишĕн партипе Советсен вырăнти органĕсем те ответлă. Вĕсем вăрманпромхозсен ĕçĕпе тĕплĕн интересленмеççĕ, производствăна тĕрĕс организацилеме, малта пыракансен опытне сарма кирлĕ пек пулăшмаççĕ.

Прение пурĕ 25 çын тухса каларĕ.

Кире вăрманпромхозăн директорĕ Зеленков юлташ коллективăн творчествăлла активлăхĕ ÿссе пынине, механизмсемпе усă курасси лайăхланнине палăртать. Пĕлтĕрхи тапхăртипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхĕ йывăç касса хатĕрленĕ тата каснă йывăçа çул хĕррине кăларнă çĕрте 20 процент ÿснĕ. Вăрманпромхоз кашни рабочи пуçне куллен вăтам шутпа 0.77 кубометр йывăç турттарса кăларать. Уйрăмах Сысуйкин, Воронин, Горбунов юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Дирекципе парторганизаци пĕр участокра йывăç хатĕрлес ĕçе цикл меслечĕ тăрăх йĕркелеççĕ. Çапла туни ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерме пулăшмалла. Вăрманпромхоз коллективĕ çулталăкри производство планне ăнăçлă тултарма сăмах панă. Улатăрти вăрманпромхоз коллективне ăмăртăва чĕннĕ.

Зеленков юлташ «Чувашлес» треста плансене тĕрĕс мар тунăшăн, материалсемпе детальсем вăхăтра уйăрса паманшăн критиклет.

Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнчи Пузанов мастер оборудованине вăхăтра юсама кирли çинчен, хăшпĕр руководительсем кивĕлле ĕçлеме тăрăшни, çĕнĕ техникăна алла илме тăрăшманни çинчен калать. Нумай мастерсем техникумсемпе курссенче вĕренмен, технологи процесне çĕнĕлле йĕркелеме пĕлмеççĕ. Пузанов юлташ вăрманпа сулă работникĕсен профсоюзĕн обкомне рабочкомсене çителĕксĕр ертсе пынăшăн, массăллă ĕçе йĕркелеме пулăшманшăн критиклет.

Вăрнар вăрманпромхозĕнчи Уштур вăрман пункчĕн начальникĕ Орешников юлташ «Чувашлес» трестпа Вăрнар вăрманпромхоз дирекцине йывăç хатĕрлес ĕçри сезонлăха пĕтерме тăрăшманшăн критиклет. Вăл каланă тăрăх, кăçалхи пĕрремĕш кварталта вăрман пунктне ытлашши пысăк задани, виççĕмĕш кварталта вара пачах пĕчĕк план панă. Çавăн пирки пĕрремĕш кварталти плана тултарайман, виççĕмĕш кварталти задание вара пĕр уйăхрах ирттерсе пурнăçланă. Çавăн пек планлани оборудованипе тата ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курма кансĕрлет. Вăрман пункчĕн коллективĕ çулталăкри планран ирттерсе 10 пин кубометр йывăç касса хатĕрлеме, 2 пин кубометр çул хĕррине илсе тухма сăмах панă.

Орешников юлташ вăрманпромхоза ут тавраш(ĕ)сем çителĕксĕр кÿрсе килнине, столовăйсем япăх ĕçленине палăртать.

КПСС Улатăр райкомĕн секретарĕ Балятинская юлташ Кирери рыбкомбинат. Улатăрти химзавод вăрман хуçалăхĕ. Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министерствине пăхăнса тăракан вăрманпромхоз производство планне ăнăçлă тултарса пынине палăртать. Çакă вăл унти парторганизацисем администрацин ĕçне тăтăшах тата тĕплĕн тĕрĕслесе тăнинчен, партилле-политикăлла тата партилле-массăлла ĕçе лайăх йĕркеленинчен килет. Алтышеври, Улатăрти вăрманпромхозсенчи, сулă юхтаракан кантурти, центральнăй ремонтнăй мастерскойри (ЦРМ) парторганизацисем хăйсен организаторла рольне кирлĕ пек ÿстермеççĕ, малта пыракансен опытне сармаççĕ, умра тăракан задачăсене пурнăçлама коллективсене мобилизацилемеççĕ. Балятинская юлташ КПСС обкомĕн лекторĕсем вăрманта пулманнине, обкомăн парти, профсоюз тата комсомол органĕсен найĕ юлса пыракан вăрманпромхозсенчи парторганизацисен ĕçĕпе çителĕксĕр интересленнине палăртать.

Хăшпĕр руководительсем вăрман промышленноçĕ юлса пынишĕн тивĕçлĕ ответлăх туймаççĕ. Çакă уйрăм юлташсем пухура тухса каланинчен палăрчĕ. Бунинскри вăрманпромхозра усă курман резервсем нумай. Вĕсене палăртманнине, техникăна татти-сыпписĕр ĕçлеттерменнине пула ĕнтĕ вăрманпромхоз чылайранпа юлса пырать. Вăрманпромхоз директорĕ Русинов юлташ хăйĕн сăмахĕнче çак майсемпе усă курасси çинчен каламарĕ, машинăсем нумайрах уйăрса памалли çинче ытларах чарăнса тăчĕ. РСФСР Вăрманпа хут промышленность министерствин Чăваш республикинчи УРС начальникĕ Никандров юлташ вăрман хатĕрлекенсем хушшинчи суту-илĕвĕ япăх йĕркеленнишĕн ответлăха вăрманпромхозсен руководителĕсем çине йăвантарма пăхрĕ, столовăйсенчи, магазинсенчи çитменлĕхсене пĕтерме мĕнле мерăсем йышăнни çинчен каласа памарĕ. Вăрманпа сулă работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ Ильин юлташ обкомпа рабочкомсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăюллăн палăртмарĕ. Актив пухăвĕ асăннă юлташсем тĕрĕс мар тухса каланине палăртрĕ.

Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министрĕ Бобров юлташ министерствăна пăхăнса тăракан вăрманпромхозсен ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинче чарăнса тăчĕ.

Пухура КПСС обкомĕн секретарĕ Н. Шмаков юлташ тухса каларĕ.

Пуху республикăри вăрман промышленноçĕ юлса пынине пĕтерме, государство çирĕплетсе панă плана тултарса пыма пулăшакан решени йышăнчĕ.

Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхне ирттерне май, ĕнер Румынире «Совет театрĕн эрни» пуçланнă. Театрсенче вырăс классикĕсемпе совет драматургĕсен пьесисене кăтартаççĕ.

Ноябрĕн 1-мĕшĕпе 7-мĕшĕ хушшинче Румынире çавăн пекех «Совет музыкин эрни» пулса иртет. Çак кунсенче Румынири радиостанцисем Совет Союзĕнчи халăхсен юррисене, совет композиторĕсен симфонилле произведенийĕсемпе юррисене параççĕ. Совет музыкин эрнине ирттерне май, Бухарестра совет фильмĕсен фестивальне организациленĕ. Столицăри чи лайăх театрсенчен пĕринче—«Патрия» кинотеатрта, «Мусоргский», «Римский-Корсаков», «Композитор Глинка», «Большой концерт» тата ытти фильмсене те кăтартма пуçлаççĕ.

Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхне уявлама кунта Государствăн Уралти халăх хорĕ килнĕ. Унăн концерчĕсем пысăк ăнăçлăхпа иртеççĕ. Совет артисчĕсем Бухарест, Яссы, Констанца, Галац, Плоешти, Тыргу-Муреш хулисенчи ĕçсыннисем валли концертсем панă. Куракансем совет искусствин представителĕсене пур çĕрте те ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Румынири хаçатсем Урал хорĕн концерчĕсене пысăк хак параççĕ. Хаçатсем хорăн пуян та нумай енлĕ репертуарĕпе художествăллă ăсталăхне палăртаççĕ.

Уйăхлăх ячĕпе Бухарестра октябрĕн 7-мĕшĕнче «СССР-ти экономикăлла тата культурăллă мирлĕ строительство» ятлă выставка уçăлнă. Румынири ĕçсыннисем выставкăпа питĕ интересленеççĕ.

Выставкăна 200 пин çын ытла пырса курнă ĕнтĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири ĕçсыннисем Октябрьти революцин 36 çул тултарнине ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. Нумай предприятисен коллективĕсем çулталăкри заданисене тултарнă ĕнтĕ. Нефтяниксем планран иртерсе çĕршер тонна нефть кăларнă. Нумай предприятисенчи металлургсемпе машина тăвакансем çитес çул шучĕпе ĕçлеççĕ.

Çăмăл промышленность работникĕсем хушшинчи ăмăртура Бухарестри Георгиу-Деж ячĕпе тăракан тумтир çĕлекен фабрика коллективĕ малта пырать. Фабрика коллективĕ ноябрĕн иккĕмĕш çур уйăх шучĕпе ĕçлет. Тимишоара хулинчи Мартăн 6-мĕшĕ ячĕпе тăракан пустав фабрикин коллективĕ планран иртерсе чи лайăх пахалăхлă 13 пин метр пустав туса кăларнă. Арад, Питешть, Бухарест тата ытти хуласенчи пир-авăр фабрикисен коллективĕсем чылай çитĕнӳсем тунă.

Туслăх уйăхлăхĕ ăнăçлă иртет

ВАРШАВА, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Республикинче Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетмелли уйăхлăх ăнăçлăн иртет. Совет Союзĕнчи халăхсем коммунизм строительствинче тунă çитĕнӳсем çинчен пур çĕрте те лекцисемпе калаçусем, докладсем иртерсеççĕ, выставкăсем организациллеççĕ. Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин членĕсен хисепĕ ӳссех пырать. Çапла, октябрь уйăхĕн 20 кунĕ хушшинче Познань воеводствинче 65 пин çын Общество членне кĕнĕ.

Совет çыннисен пурнăçĕпе тата çитĕнӳсемпе питĕ интересленсе, Польшăри ĕçсыннисем вырăс чĕлхине вĕренме тăрăшаççĕ.

1946 çултан пуçласа çак вăхăтчен çĕршывра вырăс чĕлхине вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен курссем 20 пин ытла организациленĕ. Çак курссенчен 400 пин çын вĕренсе тухнă.

Октябрь уявĕ ячĕпе

ВАРШАВА, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Республикинчи металлургсемпе пир-авăр промышленноçĕнче ĕçлекенсем, горняксемпе машина тăвакансем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса, çĕршыва планран иртерсе пиншер тонна çĕр кăмрăкĕпе металл, çĕршер пин метр пир-авăр, çĕнĕ машинăсемпе оборудовани параççĕ.

Металлурги промышленноçĕнче ăмăртăва 70 пин рабочие яхăн хутшăннă. Октябрь уявĕ ячĕпе илнĕ обязательствăсене ăнăçлă пурнăçласа, «Баторий» металлурги завочĕн коллективĕ планран иртерсе 890 тонна хурçă шăратса кăларнă. «Покуй» тата «Бобрек» заводсенчи металлургсем тăван çĕршыва планран иттерсе 3 пин тонна чугун шăратса панă.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва çĕршыври пир-авăр промышленноçĕнче ĕçлекен 150 пин çын ытла хутшăнать. Вĕсем октябрь вĕçленнĕ тĕле планран иртерсе 2 300.000 метр пир-авăр тĕртсе кăларнă.

Демократиллĕ Германи республикинче çĕнĕ домна кăмакине ĕçе янă

БЕРЛИН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинри демократиллĕ хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Сталинштадт хулинчи «И. В. Сталин» металлурги комбинатĕнче октябрĕн 31-мĕшĕнче çĕнĕ домна кăмакине ĕçе янă. Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ ячĕпе домна кăмакине «Туслăх кăмаки» тесе ят панă. Кăмакана Совет Союзĕнчи домна кăмакисем евĕрлĕ тунă. Чугун шăратас ĕçе пĕтĕмĕшпех автоматизациленĕ.

БОЛГАРИРЕ ПĔРРЕМĔШ ХУТ ПРОКАТ ТУСА КАЛАРНĂ

СОФИЯ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири В. И. Ленин ячĕпе тăракан пĕрремĕш металлурги завочĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнине производствăра çĕнĕ çĕнтерӳ тунипе кĕтсе илет. Ĕнер чаплă лару-тăрура пĕрремĕш прокатнăй стана ĕçе янă. Çĕршыв пĕрремĕш хут тăван çĕршывра туса кăларнă прокат илнĕ.

Берлинри митинг

БЕРЛИН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ пуçланнă ятпа ĕнер Берлинри «Фридрихштадтпаласт» çуртĕнче пысăк митинг пулса иртнĕ.

Митингра Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палатин председателĕ Иоганнес Дикман, Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕ Отто Гротеволь, правительство членĕсем, Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партин Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕсемпе секретарĕсем, Совет Союзĕн Демократиллĕ Германи Республикинчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ В. С. Семенов, совет культурин деятелĕсен делегаци (делегаци Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществи чĕннипе Демократиллĕ Германи Республикине пынă) руководителĕ — СССР Наука академийĕн вице-президенчĕ И. Бардин академик, Демократиллĕ Германи Республикинчи посольствăсемпе дипломатиллĕ миссисен пуçлăхĕсем, çавăн пекех партипе массăлла организацисен представителĕсем, хулари предприятисенче малта пыракансем пулнă.

Митинга Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палатин председателĕ Иоганнес Дикман уçнă.

Уйăхлăх пуçланнă ятпа Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин председателĕ Пысăк Берлинăн обер-бургомистрĕ Фридрих Эберт доклад туса панă. Митингра çавăн пекех И. Бардин академик кĕске сăмах тухса каланă.

Митинг хыççăн пысăк концерт пулнă.

ВЬЕТНАМРИ ĔÇСЫННИСЕМ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ КИТАЙ ФИЛЬМĔСЕНЕ ЮРАТСА ПАХАÇÇĔ

ПЕКИН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Вьетнамри информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Вьетнамри ĕçсыннисем Китайпа Совет Союзĕн кинофильмĕсене питĕ юратса пăхаççĕ. Ĕçсыннисем уйрăмах Китайра кăларнă «Седая девушка», «Народные солдаты» тата «Далекая деревня» кинофильмсене, Совет Союзĕнче кăларнă «Падение Берлина» тата «Незабываемый 1919-й год» кинофильмсене курма йышлăн çӳреççĕ.

Италири суд фашистсене хӳтĕлет

РИМ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 31-мĕшĕнче Римри апелляци сучĕ фашистла студент Антонио Палланте панă жалобăна сӳтсе явнă. Ăна 1948 çулта Пальмиро Тольяттие вĕлерме тапăннăшăн 13 çул та 8 уйăхлăха тĕрмене хупнă пулнă. Прокуратура Паллантене тĕрмене хупмалли срока 17 çула таран ӳстерме требовани лартнă. Анчах суд Паллантене хӳтĕлекенсен ыйтăвне пурнăçланă. Ăна тĕрмере хупса усрассине 10 çул та 8 уйăха хăварма йышăннă. Унсăр пуçне нумаях пулмасть амнисти пулнă пирки ку срок та 3 çуллăха чакать.

ПАКИСТАН РЕСПУБЛИКА ПУЛСА ТĂНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ПАРИЖ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет:

Карачири радио паян çакăн çинчен пĕлтернĕ: Пакистанăн учредительнăй пухăвĕ Пакистан малашне Исламла Пакистан республики ятлă пулмалли çинчен решени йышăннă.

„Европа çарне“ тăвассине хирĕç

ПАРИЖ, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Сена департаментĕнчи радикал-социалистсен партийĕн федераци съездĕнче «Европа çарĕ» çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явнă. Хаçатсем палăртнă тăрăх, çак ыйту пирки делегатсем хытă тавлашнă. «Орор» хаçат çапла çырать: «Съездра «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» майлă тăракансемпе вĕсене хирĕç пыракансем хушшинче вăйлă тавлашусем пынă. Çапла сăмахран, республика совечĕн членĕ Жорж Лаффарг «Европа çарĕ» çинчен тунă договор майлă тухса каланă пулсан, наци пухăвĕн депутачĕ Моро-Джиафферри ку договора тапăклăн сивленĕ.

Съездра çавăн пекех шалти ĕçсен министрĕ Мартино-Депла тухса каланă. «Европа çарне» тăвассишĕн тухса каласа, вăл Францири Коммунистсен партине айăпланă.

«Комба» хаçат Мартино-Депла тухса калани çинчен уççăнах хăй кăмăлсăр пулнине палăртса çырать.

Франци халĕ 1917 çулсем вăхăтĕнчи пек тапхăрта пурăнать, тенĕ министр. Вăл «сутăнчăксене пĕтерме кирли» çинчен каланă. Кун пирки асăнса, «Комба» çапла çырать: «Пирĕн министр сутăнчăксене хирĕç аçа-çиçĕм пек кĕрлет. Анчах паян çав сутăнчăксем ăçта-ши вара? Вĕсем—Германие хĕçпăшаллантарнипе килĕшмен французсем. Тĕп сăлтав—акă мĕнле иккен. Коммунистсем вермахт тепĕр хут çĕкленнине хирĕç тăраççĕ. Çапла ĕнтĕ, кашни французăн патриотăн Германи çитес вăхăтра хăйĕн çар вăй-хăватне тума пултарнишĕн савăнмалла».

«Монд» хаçат та Мартино-Депла тухса каланипе кăмăлсăр пулнине палăртать.

Гарри Поллит Ливерпульри митингра тухса калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Ливерпульре нумай çынлă митинг пулса иртнĕ. Унта Великобританири Коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Гарри Поллит тухса каланă.

Поллит Англири ĕçсыннисен миршĕн тата наци никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕнче ĕçсыннисем пĕрлешсе ĕçлессине организациллес тĕлĕшпе коммунистсен партийĕн программи мĕнле пулни çинчен каласа панă. «Дейли уоркер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Поллит каласа панă программа, уйрăммăн илсен, çакăншăн кĕрешме кирлине палăртать: ĕç укçи ӳстермелле. ĕç тупайманнисене пособисемпе пенси памалла: пурăнмалли çуртсемпе шкулсем тумалла; халăх сывлăхне сыхласа ĕçе лайăхлатмалла; хваттершĕн тӳлемелли укçана тата налогсене чакармалла; Америка çарĕсем Англие оккупациленине пĕтермелле; Англие ытти çĕршывсемпе суту-илӳ тума чарнине хирĕç, Малайăри, Кенири, Британи Гвианинчи тата мĕнпур колонилле халăхсемпе туслă пурăнассишĕн, Англие США-на пăхăнмасăр пурăнмалла тăвассишĕн, империри мĕнпур халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, хĕçпăшалланассине пĕтĕмĕшле чакарассишĕн кĕрешмелле тата ытти те.

Çак программа тăрăх рабочисен юхăмне хутшăнакан мĕнпур çынсем, миршĕн тăракан мĕнпур çынсем тата мĕнпур патриотсем пĕрлешме пултарĕççĕ.

Ливанри хаçат Саудовски Аравинчи рабочисен забастовки çинчен

БЕЙРУТ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ливанри «Ас-Сарха» хаçат Америкăн Саудовски Аравинчи «Арабипе америкăн ойл компани» нефть компанийĕнчи (АРАМКО) рабочисен нумаях пулмасть пулса иртнĕ забастовки çинчен тĕплĕн пĕлтерет.

Саудовски Аравинчи влаçсем АРАМКО нефть компанийĕнчи рабочисен организацилле профсоюз комитечĕн чылай членĕсене арестленĕ. Профсоюз комитечĕн çав членĕсем Рас-Танур заводĕнчи нефтьрен ытти япаласем тăвакан заводсенче хăйсен профсоюзне тума хăтланнă. Ытти çĕрти вырăнсенче те çак комитетăн членĕсене арестленĕ. Комитет членĕсене арестлесе, Саудовски Арави влаçĕсем Рас-Танура районне çĕршыври ытти районсенчен уйăрнă.

Саудовски Арави влаçĕсен çак ĕçĕсене хирĕç протестлесе, октябрĕн 16-мĕшĕнче рабочисем забастовка пуçланă, вĕсем Рас-Танура хулинче пысăк демонстраци организациленĕ. Демонстрацие хăваласа салатма влаçсем çак района полици пысăк отрячĕсене янă. Вăл отрядсем демонстрантсене хăваласа салатма тытăннă. Полицие демонстрантсем хушшинче пысăк тытăçу пулса иртнĕ.

Хаçат çакна палăртать: демонстраци вăхăтĕнче рабочисем Америкăн темиçе çар машинине тата АРАМКО компанийĕн чылай автомашинисене çĕмĕрнĕ. Çакăн хыççăн Саудовски Арави влаçĕсем çак районта чрезвычайнăй лару-тăру туса хунă, нумай рабочисене арестленĕ. Хаçат юлашкинчен çакна кăтартса парать: хальхи вăхăтра профсоюз комитечĕн арестленĕ членĕсене тискеррĕн асаплантараççĕ.

Инди премьер-министрĕ Неру шыв илнĕ пирки сиен курнă районсенче пулнă

ПАТНА, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 1-мĕшĕнче Индин премьер-министрĕ Неру, парламент депутачĕсемпе, Бихар штатĕнчи правительство членĕсемпе, вырăнти тата ют çĕршывсенчи хаçатсен представителĕсемпе пĕрле, шыв илнĕ пирки сиен курнă Бихар штатĕнчи районсен çийĕпе самолет çинче вĕçсе çӳренĕ.

Шыв илнине пула Коси юханшывĕн бассейнĕнче уйрăмах пысăк сиен курнă. Нумай ялсене халĕ те шыв хупăрласа тăрать. Шыв чакнă вырăнсенче, тырпул акнă çĕрсем çинче, халĕ çумкурăксем кăна ӳсеççĕ.

Бихар штатĕнчи правительствăн главнăй инженерĕ Синха ТАСС корреспонденчĕ çапла каланă: 1953 çулта шыв илни юлашки вунă çул хушшинче чи вăйлă пулнă. Шыв илнине пула Бихар штатĕнчи 6 миллион хресчене питĕ пысăк сиен кӳнĕ.

Шыв илнĕ пирки сиен курнă халăха вăхăтра пулăшу панăшăн Синха Совет Союзĕн Хĕрлĕ Хĕрес Обществине тав тунине палăртнă.

ШУПАШКАРТИ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕН АКТИВĔН ПУХĂВĔ

Октябрĕн 28-мĕшĕнче Шупашкарта хулари физкультурниксен активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура çуллахи спорт сезонĕн итогĕсем тата хĕллехи спорт сезонĕнчи задачăсем çинчен хула Совет исполкомĕн сывлăх пайĕн заведующийĕн физкультурăпа спорт енĕпе ĕçлекен заместителĕ Н. Хорьков юлташ доклад туса пачĕ.

Хулара физкультура коллективĕсем 80, спорт обществисем 9 шутланаççĕ. Вĕсем вунă пин физкультурника яхăн пĕрлештерсе тăраççĕ. Çуллахи вăхăтра массăллă спорт вăййисене 50 хут ытла иртерне. Унта вунă пин çын ытла хутшăннă. БГТО тата ГТО значкисчĕсем тата разряднисем вĕрентсе хатĕрлес енĕпе те чылай ĕçсем туса иртернĕ.

Массăллă спорт ĕçне аталантарас тĕлĕшпе уйрăмах Чăваш педагогика институтĕнчи физкультура коллективĕ чылай ӳсĕмсем тунине палăртмалла. Кунта 11 секци ĕçлет. Институтра спорт инвентарĕ çителĕклĕ. Ку коллектив хулара иртернĕ спорт ăмăртăвĕсене тăтăшах хутшăннă. Çавăн пекех Учительсен çуртĕн, 2-мĕш шкулти, «Кооператор» артельти физкультура коллективĕсенче те ĕçе аван йĕркеленĕ.

Анчах физкультура коллективĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем пур-ха. Хăшпĕр предприятисемпе организацисенчи коллективсенче ГТО значкисчĕсем хатĕрлесси, спорт ĕçне массăллăн сарасси ытла та начар пулса пырать. Сăмахран, тир-сăран комбинатĕнчи, лента тĕртекен фабрикăри, кирпĕч заводĕнчи коллективсем хулара иртерекен ăмăртусене хутшăнма чылай чухне командăсем туман. «Медик» спорт обществинче (председателĕ Кошелев юлташ) çуллахи сезонта пĕр çын та ГТО значокĕн нормине паман, разрядниксем те хатĕрлемен. Коопераци техникумĕнче те ку енĕпе нимех те туман.

Хулари спорт коллективĕсенче уйрăмах акробатика, бокс, шывра ишес тĕлĕшпе спортсменсем хатĕрлес ĕçре чылай çитменлĕхсем пур.

Хула Совет исполкомĕн сывлăх пайĕн физкультурăпа спорт секторĕн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх шкулсенче иртерекен занятисен пахалăхне ӳстерессишĕн кирлĕ пек тăрăшманни пулать. Хăшпĕр шкулсенче физкультура урокĕсем начар иртеççĕ, преподавательсем, инструкторсем секцисен ĕçне тивĕçлипе йĕркелеме тăрăшмаççĕ. Обществăлла физкультура кадрĕсем, уйрăмах çуллахи спорт вăййисене иртерекен судьясем хатĕрлесси начар пулса пынă. Физкультурăпа спорт секторĕ совет спорчĕн çитĕнĕвĕсене физкультура коллективĕсем хушшинче пропагандăлас, спорт ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе докладсем иртерес ĕçе кирлĕ пек хавалама(н). Хулара спорт витринисем çук. Физкультура работникĕсен — преподавательсемпе инструкторсен тата тренерсен квалификацине ӳстересси начар пулса пынă. Чăваш АССР Сывлăх министерствин физкультурăпа спорт енĕпе ĕçлекен пайĕ те кадрсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

Докладчик хĕллехи спорт сезонне хатĕрленес ыйтăва та хускатрĕ. Хĕл кунĕсенче хулара спорт ăмăртăвĕсем иртермелле. Кунсăр пуçне, хулари спортсменсем республикăра тата Россия Федерацийĕнче иртерекен ăмăртусене хутшăнаççĕ. Çавна май спорт коллективĕсем лайăх ĕçлемелле.

Пирĕн хула условийĕсенче хĕллехи спорт ĕçне аталантарма паха майсем пур. Анчах хăшпĕр руководительсен ответсăрлăхне пула çак майсемпе кирлĕ таран усă курмаççĕ. Йĕлтĕрпе сăрт-туллă вырăнсенче, конькипе фигурăсем туса ярăкансен йышĕ ытла та пĕчĕк. Физкультура коллективĕсенче хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Хăшпĕр коллективсенче спорт инвентарĕ — йĕлтĕрсемпе конькисем тата спорт костюмĕсем çитмеççĕ. Ку енĕпе уйрăмах спорт обществинче ĕç питĕ начар. Кунта хĕллехи сезона пачах хатĕрленмеççĕ теме пулать.

Пухура Кушникова, Смирнов, Никишов, Муравьев, Зорин, Гловченко, Филиппов, Петухов тата ытти юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем хулари физкультура организацийĕсен ĕçне лайăхлатма сĕнӳсем пачĕç.

Пуху физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатас, хĕллехи сезона лайăх хатĕрленес тесе йышăнчĕ.

Выляв укçи илеççĕ

ШАХАСАН. Кунти тĕп перекет касси государство заемĕсен облигацийĕсем тăрăх ĕçсыннисене çулсеренех выляв укçи нумай тӳлет. Иртнĕ çул государство заемĕсен вылявĕсем тăрăх ĕçсыннисене 325 пин тенкĕ тӳленĕ пулсан, кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче 300 пин тенкĕ выляв укçи тӳленĕ. Вăл шутра пĕр çын 50 тенкĕлĕх облигацине 6.250 тенкĕ выляв укçи илнĕ.

Г. ВАСИЛЬЕВ.

Театр

Сезон лайăх пуçланчĕ

Василий Ржанов çырнă «Энтип» ятлă пьесăна лартса, Чăвашсен государство академи театрĕ хăйĕн кăçалхи çĕнĕ сезонне пуçларĕ.

Чаршав уçăлсанах, Энтип (РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, ЧАССР халăх артисчĕ Б. Алексеев) пӳрте васкаса кĕрет те ниçта лара-тăра пĕлмесĕр каллĕ-маллĕ утса çӳрет, унтан пĕр вырăнта ăнран кайса шухăшласа тăрать. Мĕн пулнă-ши ку Энтипе? Ма çав тери пăшăрханать вăл, мĕн пирки пĕри сунать унăн? Пăшăрханмалли сăлтавĕ пур мĕн: çулталăк хушши çĕр сывăрмасăр ĕçлесе, выçăллă-тутăллă пурăнса пӳрт витме пухнă укçи çухалнă иккен.

Сахал мар пурăннă çут тĕнчере Энтип, пуçне те нумай курнă, тертне те тӳснĕ. Хăй вăхăтĕнчи пурнăçа питĕ лайăх пĕлет вăл. Ун чухне «çыншăн çын—кашкăр» пулнă, никам та Энтипе пулăшакан пулман.

— Мĕн вăл ял-йыш? Кашни хăйшĕн тăпăлланать. Пĕрне-пĕри туртса çурма хатĕр!—тет вăл чĕререн тарăхса.

— Çапăхă пĕл. Сумри арăмна та шанми пултăн вĕт!—тесе кĕрет Анюк (ЧАССР халăх артистки О. Ырзем).

Çапла ĕнтĕ, Энтип никама та шанми пулнă. Б. Алексеев ун çинчен пире кашни утăмрах асăрхаттарать. Укçа çухалнă пирки пӳртре айăн-çийĕн çаврăнă вăхăтра Пинарин пырса кĕрет (ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Н. Молодов вылять). Кам вăл Пинарин? Ĕлĕк пуянсем патĕнче тарçăра куналанса пурăннă, вăрçăра пулнă. Тĕнче курнă çын. Вăл октябрĕн 25-мĕшĕнче Питерти рабочисемпе пĕрле Зимнăй дворецна илнĕ çĕрте пулнă. Керенский правительствине хирĕç кĕрешнĕ. Вăл — класс кĕрешĕвĕнче пиçнĕ паттăр çын. Пинарин чуна савăнтаракан хыпар илсе килнĕ, анчах Энтип малтан ăна та шансах каймасть; ун çине куç айĕнчен çеç пăхать, алă тытнă чухне те пуçне тепĕр еннелле пăркалать. Пурнăçра, çут тĕнчере мĕнле тĕлĕнмелле событисем пулнине те ăнланса илеймест-ха вăл.

Энтип васкамасть, унăн шухăшламалла-ха, сăнамалла. Вăл тимлĕн сăнать. Çĕр те кирлĕ ăна, мир те кирлĕ, кивĕ пурнăç çав тери тарăхтарса çитернĕ ăна, анчах çĕнĕ пурнăç пуласса шанмасть-ха вăл. Ăçтан-ха вăл сасартăк Пинарин сăмахне шанма пултартăр?

Çакнашкал малтан никама шанмасăр, никама ĕненмесĕр, тертпе пурăнакан Энтип çăлăнăç çулĕ çине пырса тухнине, телейлĕ пурнăç тупнине, колхоза кĕнине ĕненмелле кăтартса парать автор. Кĕскен калас пулсан, драмăн тĕп идейи çакă пулса тăрать те ĕнтĕ.

Пинсĕр те сăхă кулак Ахмар Пинарина хирĕç тапăнать, вĕсем хушшинче вăйлă тавлашу хускалса каять. Энтип çав тавлашăва та хутшăнмасть.

Тĕрĕс ĕçлекенсене, ĕçхалăхĕшĕн чунне парса тăрăшакансене хăй куçĕпе хăй курмасăр, Энтип никама та шанма пултараймасть, çавăнпа «ку ĕçе мана ан хутшăнтарăр» тет вăл, анчах Ленин хресченсем патне çырнă листовкăсене Пинарин вуласа панă хыççăн, Энтип тарăн шухăша каять. Унтан çапла калать: «Юрать, кăна ăнăçлă тунă, тейĕпĕр, А леш тӳпери улпут çĕрне укçасăрах валеçсе параççĕ-и?»—ыйтать вăл Пинаринтен. Унтан вара Соколов патне пырса листовкине хăй аллипе илет, чылайччен ăна çавăркаласа пăхать. Халиччен хăйĕн хуçалăхĕпе тертленсе пурăннă вăтам хресчен чĕри патне, тен, чи малтанхи хут ăшă кăмăл тата çирĕп шанчăк пырса кĕрет? «Тĕнче çапла çаврăнать иккен»—тет вăл чылай вăхăт шухăшласа ларнă хыççăн. Унтан хăйĕн чĕре патĕнчи кăмăлĕпе çулпуç ятне, пĕтĕм ĕçхалăхне çăлăнăç панă аслă Ленин ятне асăнать. «Ле-нин»—тет вăл чĕтревен сассипе: «Ленин!»

Б. Алексеев хăйĕн пултарулăхне, хăйĕн мастерлăхне лайăх кăтартса парать. Анюк рольне вылякан О. Ырзем те хăйĕн рольне питĕ килĕшӳллĕ вылять. Анюк çемçе чĕреллĕ, ырă кăмăллă хĕрарăм. Вăл ачисене те юратать, упăшкине те хĕрхенет.

— Ара, килтен хăвалатăнах пулсан, ăçта кайса кĕрĕ ĕнтĕ вăл?—тарăхса калать ачăшĕ Володя çинчен.

— Мĕн эс пĕлмен пек лĕпĕртетен! Аслине эп хăваларăм-и? е эс хăваларăн? Пурпĕр кайса чикрĕ пуçне.. Юрать, асли, Сокол хыççăн кайса, тăнне çухатрĕ, тесе калăпăр. Кăна халь кам хушрĕ çыхланма?—кăшкăрать Энтип.

— Никам хушнипе те мар, хам ирĕкпе, атте, — хăюллăн калать Володя (Н. Степанов артист). Халĕ ĕнтĕ вăл — сентĕре çинче выляса выртакан çамрăк ача мар, тĕрĕслĕх ăçта иккенне, колхоз пурнăçĕ çеç хресченсене çăлăнăç панине лайăх пĕлет. Унăн шухăшĕ—институтра вĕренме кайиччен ашшĕпе амăшне колхоза кĕртсе çĕнĕ пурнăç тапратса ярасси.

— Çитет! Тӳр çул тупрăн пулсан, тухса ут ман килтен!—урине тапса кăшкăрать Энтип.

Çак сценăна куракансем сывламасăр тенĕ пек, шăп пулса, тимлĕн пăхса лараççĕ.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Н. Молодов Пинарин рольне выляма çĕнĕ сăрсем, çĕнĕ меслетсем тупнă.

Кайрахпа эпир ăна волком секретарĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра, юлашкинчен райком секретарĕнче ĕçленĕ чухне куратпăр. Ун чухнехи Пинарина Н. Молодов пĕлӳ тĕлĕшĕнчен нумай çулĕ ӳснĕ çын пек, парти политикине çирĕп тытса пыракан коммунист пек, ырă кăмăллă çын пек кăтартса парать. Шарашкинпа (Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Е. Никитин) тавлашнă чухне вăл унран тăрăхласа кулать те, ăна питлет те. Е. Никитин та «сулăхай загибщика», халăх тăшманне сатирăллă сăрсемпе сăрласа тĕрĕс кăтартса парать. Пинаринпа тавлашса ăна çĕнтереймен хыççăн Шарашкин, пуçне касăртса, алăк патнелле хăвăрт утать, тухса кайас умĕн хăмăт йăтса кĕрекен Энтипе хирĕç пулать, Энтип хăйĕн аллинчи хăмăтне Шарашкин ĕнси çине тăхăнтарса, ăна кулăпа пĕтерсе лартать.

Энтип волком секретарĕ патне кооперацирен илнĕ хăмăтне кăтартма пынă. Хăмăчĕ юрăхсăр пулнă мĕн.

Пинарин хăмăта хăш лавккаран илнине тĕпчесе пĕлсен, кооперации правленийĕн председательне телефонпа касхине тăхăр сехетелле хăй патне пыма хушать.

Эпир кунта драматургăн ăсталăхне те, спектакль лартаканăн (театрăн главнăй режиссерĕ К. Иванов лартнă) пысăк пултарулăхне те аван куратпăр.

Сакăнтах тата Пинарин кабинетĕнчех—Энтипе Кокшаев тĕл пулаççĕ. Энтип ĕлĕкхи пекех пурнăç çине тĕрĕс мар пăхнине, вăл çĕнĕ йĕркене çителĕклĕн ăнланса илейменнине уççăн кăтартса парать çак сцена та.

Кокшаев учитель рольне çамрăк артист А. Новиков ĕненмелле вылять. Вăл ĕлĕкхи учительсене курса, вĕсем мĕнле утнине, мĕнле çаврăнкаланине, калаçнине чылай вăхăт тимлĕн сăнаса вĕреннĕ, тейĕн.

Артистсем пурте тенĕ пекех хăйсен ролĕсене тĕплĕн ăнланса илнĕ, лайăх выляççĕ, спектакль чăн-чăн ансамбль пулса тухнă. Асăннисемсĕр пуçне, Смолин рольне оригиналлă, килĕшӳллĕ, пĕтĕм кăмăлпа юратмалла кăтартса паракан Чăваш АССР халăх артистне А. Ургалкина асăнма тивет.

Хресченсем чылайăшĕ çĕнĕ йĕркене часах ăнланса илейменнине, ĕлĕк вĕсем «тӳре-шарасенчен» хăраса, сехри хăпса пурăннине Смолин (продотряд начальникĕ) пит лайăх пĕлет, çавăнпа вăл Энтип килĕнче йăвашшăн, васкамасăр, сăпай каласать, Сантăрпа Володьăна ачашлать, вĕсем ытлашши ашкăнма пуçласан, выляса, шӳт туса çурăмран çапать. Çапла майпа вăл вĕсене хăй енне çавăрать, анчах Сантăрпа Володя тенĕшĕн иккĕшĕ те пĕр пекрех выляççĕ. Пĕри сентĕре çинчен сиксе ансан, ун хыççăн тепри те тăрăслатса анать, пĕри Смолинăн сăран пиншакне сăтăрса пăхсан, тепри те сăтăрса пăхать, пĕри Смолин çăматтине хывнă чухне йăванса кайсан, тепри те çавăн пекех йăванса каять. Кунашкал вылянине килĕшӳллĕ теме çук.

Лайăх вылякан артистсенчен «Советская Чувашия» колхоз председателĕн П. Соколовăн рольне вылякан А. Бубнов артиста, Матви ролĕнчи Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистне А. Семенова, Ахмар кулак рольне вылякан Н. Терентьев артиста, Чышкă Павăлĕ ролĕнчи Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистне Г. Фадеева, Антоша ролĕнчи Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистне Б. Маркова, Тоня Петрова ролĕнчи Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисткине Т. Еруслановăна, землемер ролĕнчи Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистне В. Родионова асăнса хăварма кирлĕ. Ытти артистсем те хăйсен рольне лайăххăн выляççĕ.

Çак спектакльрех эпир П. Дмитриев художник таланчĕ ӳснине курса савăнтăмăр: пĕтĕмĕшпе илсен, оформлени питĕ аван, нимрен ытла тăваттăмĕш пайĕн иккĕмĕш картина декорацийĕ пăхса ытарма çук илемлĕ. Юлашки картина декорацийĕ те лайăх: лăпкă та хĕвеллĕ кун, усланкă урлă çӳллĕ тулă хирĕ тинĕс пек сарăлса выртать, инçетра «Советская Чувашия» колхозăн çĕнĕ те пысăк çурчĕсем илемлĕн курăнса лараççĕ.

Театр сезонĕ кăçал ăнăçлă пуçланчĕ. Малашне те пирĕн театр идея тĕлĕшĕнчен вăйлă, художество тĕлĕшĕнчен çӳлĕ шайра тăракан, чĕрене хумхантаракан спектакльсем ытларах кăтартасса шанса тăратпăр.

С. ЯЛАВИН.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 4-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Песня родной стороны».

Сеанссем пуçланаççĕ: 14 сехет та 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м. тата 20 с. 15 м.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-20, секретариат—3-54, промышленноçть пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-64, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09022 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2495. Тираж 20.000 экз.